Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАРТ 27 ВЫРСАРНИКУН 70 (4883)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Вăрман йухтарассине стаханăвла иртерер

Çуркунне çитрĕ. Йухан шывсем пăрсенчен тасаличчен шутлă кунсем çеç йулчĕç. Çавăнпа пĕрлех вăрман йухтарас ĕçри чи хĕрӳлĕ, ответлă вăхăт пуçланать.

Кăçал пирĕн республикри вăрман хатĕрлекен организацисен шывсем тăрăх промышленнăç валĵи 204 пин кубла метр йăвăç йухтармала. Ку хисепрен нумай пайне кĕске вăхăтлăха çеç шыв тулакан Бездняпа Сăр шывĕсем тăрăх йухтармала пулать. Апла пулсан вăрман йухтарас ĕçе кĕске срукра, шыв тулнă вăхăтри 5—6 кун хушшинче туса çитермеле.

Вăрман йухтарас ĕçе кĕске срукра пурнăçа кĕртессине малтанах тĕплĕн хатĕрленни тата пысăк организацилĕхпе тимлĕн ĕçлени татса парать. Пĕтĕм ĕçе çирĕп график тăрăх организацилемесен, ĕç вăйĕ тата кирлĕ материалсемпе ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ пулмасан, рабочисем валĵи ĕçлеме, пурăнма условисем туса памасан, вăрман йухтарасси хăрушлăха йулма пултарать.

Çавăн пек хăрушлăхсем пури-ха халĵхи вăхăтра? Чăвашвăрманпромăн тата вăрман йухтаракан Шăмăршă, Улатăр, Шупашкар, Алтышевă вăрманпромхозĕсен халĵхи ĕçĕсем çавăн пек хăрушлăхсем пурри çине кăтартса парассĕ. Йухтармалли йăвăçсене шывсем хĕрне кăларас плана мартăн 20-мĕшĕ тĕлне 70 процент çеç тултарнă. Ку йенĕпе уйрăмах Улатăр вăрманпромхозĕ начар ĕçлет. Вăл 117 пин кубла метр, вырăнне 36 пин кубла метр çеç турттарса кăларнă.

Кирлĕ таран ĕç вăйĕ пухма малтанах договăрсем туманни, патне çитсен пысăк чăрмав кӳнине вăрман хатĕрлекен организацисем хăйсен ĕçĕнче те пĕр хут çеç курман. Анчах вăл ĕç çине çиелтен пăхас йăлана халĕ те пăрахмассĕ. Вăрман йухтарнă çĕрте ĕçлеме 1955 çынпа договăрсем тумалла. Мартăн 20-мĕшĕ тĕлне 1290 çынпа çеç договăрсем тунă. Шăмăршă вăрманпромхозĕ (директăрĕ Матвейĕв) 500 çынпа договăр тăвас вырăнне 130 çынпа çеç тунă. Шупашкарпа Улатăр вăрманпромхозĕсен те мухтанмалли çук. Договăрсем тăвасси çавнашкал кайа йулнине вăрманпром тата вăрманпромхозсен руководителĕсем çавăрнă-çусăр ĕçленипе хакланисĕр пуçне урăх нимĕнле сăлтавсемпе те хакламасçук. Вăхăт çителĕклĕ пулнă.

Вăрман йухтарнă çĕрте малтанхи кунсенчех материалсемпе инструментсем: вĕренсем, сăнчăрсем, лумсем, пакурсем кирлĕ пулассĕ. Кунашкал йапаласем вăрман работникĕсем калана тăрăх çителĕклĕ таран пур. Анчах вăл материалсене пайана, çитсе те участкăсене çитермен. Вĕсем складсенчех выртассĕ. Кăна нийепле те каплипех хăвармала мар.

Вăрман йухтарассине стаханăвла иртерме кăçал лайăх условисем пулассĕ. Йур нумай пулни шывсем вăйлă туласси çинчен калать. Апла пулсан вăрман йухтарассине ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси пĕтĕмпех вăрман йухтаракан организацисенчен килет.

Вăрман йухтарнă çĕрти рабочисем уйрăм условисенче, хуласемпе йалсенчен айакра, вăрман варĕнче пурăнмала пулать. Ку енте йухтарнă çĕрте ĕçлекенсен пурнăçне пур йенчен те лайăх йĕркелеме ыйтать. Вăрман организацисен ăна тума мĕн кирлисем пурте çителĕклĕ. Анчах тимлесе ĕçлемесĕр, вăйсене мобилизацилемесĕр, пуйан условисемпе те усĕмсем тума май çук. Сталин йулташ сăмахĕсемпе каласан çентерӳ вăл йихăçан та хăй тĕллĕн килмест, ăна кĕрешсе илмелле. Çавăнпа вăрман йухтаракан организацисен йăвăçсене йухтарас ĕçе пур йенчен те хатĕр пулнипе тытăнмала. Материалсемпе ĕç хатĕрĕсене участкăсене илсе пымала. Бараксене йусаса тасатмала. Массăлă агитаци ĕçне йĕркелемеле. Хаçатсемпе журналсем çителĕклĕ пулчăр, радио ĕçлетĕр. Ку ĕççене партипе профсойуз организацисен хăйсен аллине илмеле.

Пирĕн тĕрлĕ çимĕççем çителĕклĕ пур. Пайанхи куна Чăвашлеспродторг çимĕççем хатĕрлемен. Кунашкал вăрахлăха чатма çук, çимĕççене çул пăсăличченех кирлĕ таран участкăсене илсе пымала. Вăрман йухтаракансене лайăх та тутлă апатçимĕççем çитерессине организацилемеле.

Пĕтĕм ĕçе малтанах шутласа тунă çирĕп график тăрăх организацилесен, социалисăмлă ăмăртупа стаханăвлă йухăма вăйлатма майсем туса парать. Кашни бригадăна, рабочийе ăмăртăва йавăçтармала. Çапла туни вăрман йухтарассине ăнăçлăн пурнăçа кĕртме çул уçса парать.

„А. М. Горький пурнăçĕн, ĕçĕн тата творчĕствин летопиçĕ"

Вырăссен аслă писателĕ туса хăварнă творчествăла ĕçе аслăлăх йенчен тĕпчесе вĕренни

А. М. Горький йачĕпе тăракан пĕтĕм тĕнчери литературă институчĕ вырăссен аслă писателĕ Алексей Максимăвич Горький туса хăварнă творчествăла ĕçе аслăлăх йенчен тĕпчесе вĕренессипе ĕçлет. Институтра йатарласа Горький секцийĕ тунă. Унăн тĕп задачисем малтанлăха „А. М. Горький пурнăçĕн, ĕçĕн тата творчĕствин летопиçне" тăвасси тата Горький сочиненийĕсене, суйласа илнĕ çырусене пухса кăларма хатĕрленес ĕç пулса тăрать.

А. М. Горький архивĕнче халĵ алçырăвĕсем, çырусем, документсем мĕн пурĕ 63 пине йахăн, Горький çинчен пичетленĕ кĕнекесем, брошӳрăсем, статйасем тата заметкăсем мĕн пурĕ 40 пине йахăн пичетлĕ йединица тухнă.

(ТАСС).

„Иосиф Сталин" пăрçĕмĕрене тунă çĕрте

ЛЕНИНГРАД, мартăн 25-мĕш. (ТАСС). „Иосиф Сталин"—пăра çĕмĕрсе ишсе пыракан пăрахут,—вăл совет Арктикă флочĕн пулас флагманĕ. „Иосиф Сталин" пăрçĕмĕрен—тĕнчери чи пысăк пăрçĕмĕрен пулать. Ана тунă çĕрте халĵ ĕç пĕр минутлăха та чарăнмасть. Талăкепех механизмсене вырнаçтарса лартас ĕç пырать.

Пăспа ĕçлекен виçĕ тĕп машинăна вырнаçтарса лартнă та ĕнтĕ, вĕсен хăвачĕ кашниннех 3.300 лаша вăйĕ чухлĕ. Навигацилĕ приборсене вырнаçтарса лартасси пуçланнă. Радио пӳлĕмне йăлтах туса пĕтернĕ.

Пăрçĕмĕрен çинчи пурăнмалли тата ытти кайутăсене илемлĕ тăвассĕ. Матроссен пурин те пĕрле пурăнмала пулмасть. Вĕсене валĵи тăватшарăн пурăнмалли кайутăсем тăвассĕ. Матроссемпе експедицире пулакансем илемлĕ те аслă кайуткомпанире тата Ленин кĕтесĕнче канассĕ. Кунта кинофилĵмсем пăхма, радиоконцертсем итлеме пулать. Командă валĵи—пуйан библиотекă, мунча, кĕпе-йĕм çумалли, душсем пулассĕ.

1.444.500 гектар акнă

Совет Сойузĕн кăнтăрти районĕсенче çураки ĕçĕ хĕрсех пырать. Мартăн 20-мĕшне кăнтăрти колхозсемпе совхозсем 1.444.500 гектар акнă. Иртнĕ çулта ку вăхăт тĕлне 1.147 пин гектар акнă пулнă.

Одессă облăçĕнчи кăнтăр йенчи районсенчи колхозсем пучахлă тырăсене акса пĕтернĕ. Ростăв облăçĕнче çураки ĕçĕ 15 районра пуçланнă, çавăн пекех Белоруççин кăнтăрти районĕсенче те çураки ĕçĕ пуçланнă. Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнче Приморйĕ облăçĕнчи колхозсем 500 гектар акнă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

●● Испани республикин çутĕç министăрĕ Хесус Ернандес Совет Сойузĕнчи халăхсене халаласа Испани кĕнекисен хаклă коллекцине йанă, коллекцире 1 500 том шутланать. Коллекцире—Испанин классикăлă литературă кĕнекисен серийĕ, Испани писателĕсен чи лайăх произведенийĕсем, Лопе-де-Вега тата Сервантес çырнă кĕнекесене илемлĕтсе кăларнă уйрăм изданисем, Испани историйĕ çинчен Лафуенте çырнă авалхи изданисем, чаплă художниксен картинисемпе ӳкерчĕкĕсен алĵбомĕсем.

●● Шчорс хулинче, Ленин урамĕнчи çуртсенчен пĕрин çумне çакăн пек мемориаллă хăма çыпăçтарнă: „Çак çуртра, А. Шчорс машинис çемйинче, легендарлă пролетарилĕ полководец Николай Александрăвич Шчорс çуралнă 1895—1919". Халĵхи вăхăтра çак çурта ĕлĕк мĕнле пулнă, çавăн пекех туса майлаштарассĕ. Николай Шчорс пурăннă пӳлĕме тата унăн ашшĕ пурăннă иккĕмĕш пӳлĕме йусассĕ. Кухньăри урай хăмисене илнĕ чухне унта йухрепе тухнă. Кунта Шчорс хĕçпăшал пытарнă пулмала, тесе шутлассĕ.

●● Мариупăльри Илйич йачĕпе тăракан савăт мартăн 25-мĕшĕнче мĕн пур металлурги цикли тăрăх плана тултарса çитернĕ. Кварталь планĕнчен иртерсе 1.120 тоннă чукун шăратнă, 15.400 тоннă прокат тата 300 тоннă труба панă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (сулахайран сылтăмала) Совет Сойузĕн Геройĕсем О. Йу. Шмидт, Е. Т. Кренкел, Пе. К. Федăрăв, И. Д. Папанин тата П. П. Ширшов „Йермак" пăрçĕмĕрен бортĕнче. С. Лоскутов фото-ӳкерчĕкĕ. (Сойузфото).

Сыва пулччăр герой-папанинцăсем!

Мĕн пур çут тĕнче умĕнче хăйсен паттăрлăхне кăтартнă папанинцăсем Пысăк Çĕр çине сыва та çĕнтерӳлĕ таврăннипе савăнса, епĕр, Овруч хулинчи № часĕнчи красноармейцăсем, митинг туса иртертемĕр. 4 хăйулă паттăр тимиçе уйăх хушши Арктикăн чăрсăр çанталăкĕпе кĕрешсе аслăлăхла пысăк ĕçсем турĕç. Вĕсен ĕçĕсене Совет çĕршывĕн 170 мĕлйунлă халăхĕ ăша кăмăлпа пăхса сăнаса тăчĕ.

Фашисла, капиталисăмлă çĕршывсенче нихăçан та çавăн пек геройсем пулман, пулма та пултараймассĕ. Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем çеç геройсем пăхса çитĕнтерессĕ.

Сыва пултăр пирĕн аслă çулпуç Сталин!

Сыва пулччăр Сталин пăхса çитĕнтернĕ герой-папанинцăсем!

Красноармейĕц П. Й. Осипăв.

Ленинград облăçĕнчи колхоз кинофестивалĕ

Ленинград облăçĕнче колхоз кинофестивалĕ пысăк ăнăçлăхпа иртсе пырать. 22 районра 300 сеанс ытла кăтартнă, вăл сеанссенче 75 пин çынна йахăн пулнă. Сасла тата сассăр кинопередвижкăсем—100 ытла колхозсене тухса кайнă, вĕсем „Ленин в Октябре", „Великий гражданин", „Богатая невеста" т. ыт. картинăсем те кăтартассĕ.

Йулашки хыпарсем

Литвара çĕнĕ правителства тунă

Каунасран (Литва столици) пĕлтернĕ тăрăх, Тубйалис йертсе пыракан Литва правителстви отставкăна тухнă. Çĕнĕ правителства туса хунă. Çĕнĕ правителствăн министăрсен совечĕн председателĕ—Миронас. Вăл йулашки вăхăтчен Литва çарĕн тĕп капелланĕ—(свиащенник) пулса ĕçленĕ.

(ТАСС).

Берлинри арĕссем

ПАРИЖ, мартăн 24-мĕш. (ТАСС). Гестапо (Германири вăрттăн полици) Берлинра „германская партия свободы" текен партине организацилекенсене 40 çынна тытса арĕсленĕ. Гестапо вăрттăн ĕçлекен радиопередачăсене ăçтан панине, çавăн пекех Германи халăхне фашисла йĕркене хирĕç чĕнсе калакан листовкăсем ăçтан тухнине тупас тесе темиçе уйăх хушши шыранă, анчах тăрăшни ахăлех пулнă. Арĕсленисене пурне те Германи влаçĕсем государствăна хирĕç сутăнчăклă ĕç тунă, тесе айăплассĕ. Вĕсем вĕлермеле тăвас хăрушлăх умĕнче.

Михейĕвсен çемйи Инçет-Хĕвелтухăçне тухса кайнă

Хăйĕн тăваттăмĕш ывăлне Хĕрлĕ Çара ăсатнă чухнĕ, колхозник Дмитрий Федăрăвич Михейĕв Инçет-Хĕвелтухăçĕнче пулнă. Вăл пĕтĕм çемйипех Инçет-Хĕвелтухăç крайне йаланлăхах пурăнма куçма шутланă.

Мартăн 25-мĕшĕнче хăвăрт çӳрекен пуйăспа Дмитрий Федăрăвич пĕтĕм çемйипех Инçет-Хĕвелтухăçне тухса кайнă.

Куйбышĕв облăçĕнчи Барыш районĕнчи ĕççыннисем мухтавлă совет патриочĕсен çемйине ăша кăмăлпа ăсатса йанă. Пуйăс тапранса кайиччен станцăра кĕске митинг пулса иртрĕ. Вăл митинга Барышри, кӳршĕри колхозсенчи тата промышленнăç предприйатисенчи ĕççыннисем çĕршерĕн пухăннă.

(ТАСС).

В. И. Ленин çинчĕн ӳкернĕ картинăн иккĕмĕш çерийĕ

„Ленин в Октябре" кинофилĵмăн режиççорĕсемпе артисĕсем—Сойуз орденĕсене илнĕ Б. Шчукин, А. Каплер, М. Ромм, Б. Волчек пысăк наградăсем панăшăн партине, правителствăна тата Сталин йулташа тав туса, çапла çырассĕ:

„Пирĕн умра çакăн пек задачă тăрать—аслă Ленин çинчен ӳкернĕ произведенине малала тăсмала. Ăна епĕр Иосиф Виссарионович Сталин пуçарса йертсе пынипе тăватпăр. Ленин çинчен ӳкерекен картинăн иккĕмĕш çеринче епĕр татах çӳлĕ сыпăка хăпармала. Унта епĕр 1918 çулта парти çĕнĕ тĕнчен, социалисăмлă çĕнĕ стройăн пур тăшманĕсемпе те кĕрешсе лынине кăтартатпăр".

(ТАСС)

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра мартăн 24-мĕшĕнче кунĕпех пит хайар çапăçусем пынă. Уескăран çурçĕр йенчи районра пăлхавçăсем хĕснипе республикă чаçĕсен Нуеноран тата Араскуесран тухса кайма тивнĕ. Ебро йуханшывĕнчен кăнтăр йенчи районра республикă çарĕсем пăлхавçăсене малала кайма чарса лартнă.

Арагони фронтĕнче мартăн 23-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусем республиканĕçсен Каспе тата Алĵканис хушшинчи линире тунă позицийĕсем çирĕппине ĕнентерсе парассĕ. Италипе Германи дивизийĕсем, йулашки ернере пысăк çухатусемех тунипе фронт ăшне шалала наступлени тума пултарайманскерсем, урăх вырăнта çапăçма пуçланă, Уескă сектăрĕнче наступлени тума тытăннă.

Испани пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Тардийентăна пăлхавçăсем темиçе сехет хушши сывлăшран бомбăсем пăрахса çĕмĕрнĕ хыççăн тин туртса илнĕ. Çакăн хыççăн артиллерирен пеме пуçланă, танксемпе тапăнса пынă, тата Испанире вăрçă пуçланнăранпа Германи çарĕсем чи пирвайхи хут тĕтĕм йарса, вăрçнă чухне тĕтĕмпе усă курнă. Пăлхавçăсен тапăнса пыракан çарĕсене хирĕç республиканĕçсем вăйлăн тăнă, вĕсем хăйулă контратакăсем туса пăлхавçăсен малта пыракан чаçĕсене пĕтерсе тăкнă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче Ӳкерчĕк çинче: Республикă çарĕсен бсецĕсем. (Сойузфото).

КĔСКЕН

◆◆ Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен государствă çекретарĕ (йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хелл Йевропăри тăхăр çĕршыва, çавăн пекех Кăнтăр-Америкăри мĕн пур çĕршывсене чĕнӳ йанă, çав чĕнӳре вăл Германипе Австрирен тухса тарнă политикăлă емигрантсене пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлеме йатарласа комитет организациленĕ çĕре хутшăнма сĕннĕ.

◆◆ Йапони пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Йапонин суту-илӳ министĕрстви уйрăм хуçасем аллинче тăракан предприйатисене тимĕрпе хурçăна картăчкă çистеми тăрăх сутмала тунă. Çĕркăмрăке çитмен пирки мĕнле ĕçсем туса иртересси çинчен сӳтсе-йавма мартăн 23-мĕшĕнче промышленнăçпа хуçалăх организацисен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, халĵхи вăхăтра Манчжурире çĕркăмрăкĕ тупас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе план хатĕрлессĕ.

(ТАСС).

Америкăра „Негрсен нацилĕ конгресĕ" уçăлнă

Çак кунсенче Вашингтонра (Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем) „Негрсен нацилĕ конгресĕ" уçăлнă. Конгреса Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи 20 штатран 110 делегат пынă. Производствăлă сойузсен комитечĕн представителĕ Брофи çапла каланă: комитет „Линч сучĕсене" пĕтерсе лартас шутпа пулса пыракан йухăма майлă,—тенĕ.

* * *

„Линч сучĕ" вăл—мĕнле те пулин преступлени тусан, айăпланакана пĕтĕм халăх куçĕ умĕнче тискеррĕн асаплантарса вĕлермели Америкăри йĕрке. „Линч сучĕпе" пуринчен ытла негрсене, вĕсем шурă ӳтлĕ çынсене хирĕç „преступленисем" тунă тесе айăплассĕ. „Линч сучĕпе" айăпланакана çакса вĕлерессĕ йе вут ăшне пăрахса çунтарассĕ. Линчевани тума пăлартнă çынна час-часах полицейскисем йе тĕрме влаçĕсем çав çынна тискеррĕн асаплантарса вĕлерессине организацилекенсен аллине тытса парассĕ. Америкăри буржуалă хаçатсем вара халăхсене: çав негра çав вырăнта линчевани тăвассĕ,—тесе васкавлă телеграммăсем пичетлесе кăларса пĕлтерессĕ.

(ТАСС).

Парти пурнăҫĕ

Колхозри пуҫламĕш парторганизацинче

Карачри парторганизаци парти ĕҫне урăхлатса ҫĕнетес май чылай лайăх ĕҫсем туса иртерет. Пуҫламĕш парторганизацинче 3 член, виҫҫĕшĕ те хĕрарăмсем. Кунти коммунискăсем хăйсен политикăла пĕлĕвĕсене куллен хăпартса пыраҫҫĕ. Пурте парти историне вĕренеҫҫĕ, занятисене пĕр сиктермесĕр ҫӳреҫҫĕ. Муромцĕвă парторг пединститутра заочнă вĕренет.

Кунти коммунискăсем хăйсем вĕренеҫҫĕ ҫеҫ мар, вĕсем массăсене вĕрентес тĕлĕшпе те чылай пахă ĕҫсем туса иртереҫҫĕ. Халĕхи вăхăтра РСФСР суйлав саккунне вĕрентме 9 кружок организациленĕ. Ку кружоксенче 558 суйлавçă вĕренет. Кунта кашни коммунис, сочувствуйушчи, комсомолец, учител, агитаттăр пулса ĕҫлет. Акă, Кабачков агитатăр РСФСР суйлав саккунне çамрăксене вĕрентет. Халĕ вăл суйлав Положени тăрăх ыйтусемпе ответсен касĕ туса иртерме хатĕрленет. Вăлах колхоз бригадинче колхозниксене „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ ҫинчен тата суйлав саккунĕ ҫинчен ăнлантарса парать. Спиридонов агитатăр — учител суйлав саккунĕ ҫинчен виҫĕ занятие иртернĕ. Унсăр пуҫне тата вăл тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем ҫинчен тата тĕн сĕрĕмĕ ҫинчен колхозниксене ăнлантарса парать. Савинă агитатăр конюхсен кружокне йĕртсе пырать. Изосимăвă агитатăр пульницăра ĕҫлекенсемпе занятисем иртерет. Голубинă агитатăр хĕрарăмсене килĕсене ҫӳрсе вĕрентет.

Ҫакăн пек ĕҫсене туса иртернĕ хыҫҫăн, колхозниксем, колхозницăсем хăйсем хаҫатсене вулама тытăнчĕҫ. Ăнланман ыйтусене ыйтса пĕлеҫҫĕ. Сухалăвă агитатăр малтан хĕрарăмсене киле кайса вĕрентетчĕ. Халĕ хĕрарăмсем ун патне килне вĕренме пыраҫҫĕ, тĕрлĕ ăнланман ыйтусене ыйтса пĕлеҫҫĕ.

Пуҫламĕш парторганизацинче парти кабинечĕ пур. Ку парти кабинечĕ агитатăрсене ĕҫре пулăшса пырать. Муромцĕвă парторг агитатăрсемпе семинарсем иртерет, тĕрлĕ ыйтусемпе консультацисем парать. Ҫавăнпа кунта кашни кунах агитатăрсене курма пулать.

Иртнĕ вăхăтра парти кабинетне касхине те парти Тĕпкомĕ ҫумĕнчи заочнă вĕренмели Институт паракан радиолекцисене итлеме пухăначчĕҫ. Халĕ радио ĕҫлемесĕр ларать. Райкомăн культпроп пайĕн пуҫлăхĕ Матросăв йулташ кунта парти истори кружокне йĕртсе пырать. Вăл ҫак ҫитменлĕхсене курса тăнă пулсан та, парти кабинетне укҫа-тенкĕпе пулăшасси ҫинчен райкомра ыйту лартман.

Парторганизаци ҫумĕнче сочувствуйушчисен группине организациленĕ. Группăра 5 ҫын. Вĕсенчен касал 4-шне сочувствуйушчисен ретне илнĕ. Халĕ каллех Сергейĕвăпа Петров йулташсем сочувствуйушчисен ретне кĕме ыйтусем панă.

Парторганизаци сочувствуйушчисене вĕрентсе ҫитĕнтерес тĕлĕшпе татăклă ĕҫлет. Сочувствуйушчисене пурне те парти вĕренĕвне хутшăнтарнă. Вĕсене валли уйрăм кружок тунă. Занятисем кашни уйăхрах икĕ хут пĕр сиктермесĕр пулса иртеҫҫĕ. Кружока райком инструктăрĕ Толстов йулташ йĕртсе пырать. Сочувствуйушчисем парти уҫă пухуĕсене ҫӳреҫҫĕ. Парторганизаци вĕсене тĕрлĕ ĕҫсем парса парти ĕҫне хутшăнтарать. Халĕхи вăхăтра вĕсенчен чылайĕшĕ агитатăрсем пулса ĕҫлеҫҫĕ.

Парторганизаци ҫитĕнтернĕ сочувствуйушчисенчен хăшпĕрисем халĕ районра ĕҫлеҫҫĕ. Куҫмин сочувствуйушчийĕ районри халăх хуҫалăхĕн учот управленине ĕҫлеме лартнă. Владимирăв сочувствуйушчи районри ҫулйĕр пайĕнче ĕҫлет.

Парторганизаци комсомол организацине те куллен вĕрентет, ĕҫре пулăшса пырать. Иртнĕ ҫулта шкулри комсомолăн пуҫламĕш организацинче 7 комсомолец пулнă. Касал каллех 7 çамрăка комсомола илнĕ. Кунсăр пуҫне тата колхоз ҫумĕнче комсомолăн пуҫламĕш организацийĕ тунă. Халĕ кунта та виҫĕ çамрăка ҫĕнĕрен комсомол ретне илнĕ. Комсомолецсене пурне те политвĕренĕве хутшăнтарнă, вĕсенчен чылайĕшĕ хаҫат вулавҫисем пулса ĕҫлеҫҫĕ. Парторганизаци халĕ виҫĕ комсомолеца парти кандидатне илме, парти кандидатне Морсков йулташа члена куҫарма хатĕрлет.

Карачри парторганизаци ĕҫĕнче ҫитменлĕхсем те пур. Парторганизаци хăйĕн ĕҫне хуҫалăх ĕҫĕсемпе ҫителĕклĕн ҫыхăнтарса пыраймасть. Ҫавăнпа та ĕнтĕ Карач йалсовечĕ государствă умĕнчи обйязателствăсене вăхăтра тултарса пымасть. Хуҫалăх ĕҫĕсене партилĕ-политикăлă ĕҫсене вăйлатнипе ҫыхăнтарса туса пымала. Ҫакна манма йурамасть. **П. Перлов.**

Политзанятисем аван иртеҫҫĕ

ЕЛЕК. Писепри туллимар вăтам шкул ҫумĕнче коммуниссен партии историне вĕренмели кружок ĕҫлет. Кружокра пурĕ 11 ҫын вĕренеҫҫĕ. Вĕсенчен 5-ш комсомолецсем. Кружока Николайĕв йулташ йĕртсе пырать.

Вĕренекенсем пурте занятисене йĕркелĕ ҫӳреҫҫĕ. Занятисем ернере пĕр хут пулаҫҫĕ. Вĕренӳре уйрăмăнах Владимирăвпа Соловйов лайăх вĕренсе пыраҫҫĕ.

В. Алексейĕв.

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене ҫырăнаҫҫĕ

◆◆ Нурăсри (Вăрнар районĕ) педучилищăра вĕренекенсемпе вĕрентекенсем мартăн 23-мĕшĕнче пĕрлешӳлĕ пуху туса иртерчĕҫ. Пухура Осоавиахимăн 12-мĕш летерей билечĕсене ҫырăнас ыйтăва сӳтсе-йавса, лотерей билечĕсене пухурах 1150 тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ, 300 тенкĕ укҫа пухса пачĕҫ.

М. Иванов.

◆◆ Мартăн 22-мĕшĕнче Пединститутри Осоавиахим организаци активĕн уҫă пухуĕ пулса иртрĕ. Пухура Комиссарăвпа Николайĕв йулташсем 15-шер тенкĕлĕх, Корнилов, Миронăв т. ыт. те 10-шар тенкĕлĕх 12-мĕш лотерей билетне ҫырăнса илчĕҫ.

Мартăн 23-мĕшĕнче мĕн пурĕ 2185 тенкĕлĕх ҫырăнна. Вăл шутран математика факултечĕ 1970 тенкĕлĕх, йестествознани факултечĕ—792 тенкĕлĕх, чĕлхепе литературă факултечĕ 716 тенкĕлĕх, истори факултечĕ 707 тенкĕлĕх ҫырăнна.

А. Сорокин.

◆◆ Шупашкарти музыка училищинче вĕренекенсем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене хапăл тусах ҫырăнаҫҫĕ. Ананий Камайĕв 15 тенкĕлĕх, Казаков 12 тенкĕлĕх, Федорăв 10 тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ.

К. Никитин.

◆◆ Шупашкарти педрабфак студенчĕсем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене кашни 3—4 тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ.

Ф. Галкин.

Амăрту пуҫланса кайрĕ

Мартăн 23-мĕшĕнче Чăваш АССР Йустици халăх комиссариатĕнче ĕҫлекенсен пухуĕ пулса иртрĕ. Пуху Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне сарасси ҫинчен сӳтсе-йаврĕ.

Доклад хыҫҫăн тухса калаҫакансем лотерей билетне ҫырăнни социалисăмла ҫĕршыва ҫирĕплетес ĕҫре пысăк пулăшу панине палăртрĕҫ. Ҫавăнтах лотерей билетне ҫырăнассипе амăрту пуҫланса кайрĕ. Йевстролăв йулташ 62 тенкĕлĕх, Ҫеменăвпа Бундин йулташсем 60-шар тенкĕлĕх, Филиппăв, Каржанăв, М. Алексейĕв тата Николайĕв йулташсем кашнийĕх 50-шар тенкĕ ҫырăнса ытти работниксене амăртăва чĕнчĕҫ.

Ытти ĕҫре ĕҫлекенсем те лотерей билетне хавасланса ҫырăнаҫҫĕ. Акă, шофĕр Осипăвпа практикантка Волосткова, 15-шер тенкĕлĕх, Скворцовă—20 тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ. Блинов йулташ 10 тенкĕлĕх ҫырăнса укҫине ҫавăнтах парса татрĕ.

Вăтамăн шутласан „Йустици халăх комиссариатĕнче ĕҫлекенсем кашнийĕх 30—40 тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ.

Осоавиахимăн лотерей билетне сарассипе уйрăмăнах пуҫламĕш Осоавиахим организацин председателĕ Морозăв йулташ тăрăшса ĕҫлет.

Леонтйĕв.

Районри организацисенче

Тутаркас районĕнчи ĕҫсыннисем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă билечĕсене массăлăн ҫырăнаҫҫĕ. ПСК(б) Партипе комсомол райкомĕсенче ĕҫлекенсем 460 тенкĕлĕх, райҫĕрĕҫ пайĕнче ĕҫлекенсем 200 тенкĕлĕх, районри колхоз шкулĕнче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем 200 тенкĕлĕх, „Ĕҫ йалавĕ“ редакцинче ĕҫлекенсем 115 тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ.

Уйрăм ҫынсем: райĕҫтăвкомра ĕҫлекен Калинин йулташ 52 тенкĕлĕх, халăх хуҫалăх учотĕнче ĕҫлекен Кабуркин йулташ 45 тенкĕлĕх, комсомол райкомĕнче ĕҫлекен Йемелйанăв йулташ 50 тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ. **М. Исайĕв.**

Минск хулинчи Советскайа урамри ҫурт, унта РСДР Партийĕн 1-мĕш сйесĕ пулса иртнĕ (1898 ҫулти март уйăхĕнче).

(Пресс-клише).

Ҫекцисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕҫлеҫҫĕ

ИШЛЕЙ. Мăнал йалсовечĕ районра лайăх ĕҫлекен йалсоветсенчен пĕри шутланать. Йалсоветĕнчи ҫекцисем лайăх ĕҫлеҫҫĕ. Пурĕ 11 ҫекци. Вĕсем кашнийĕх пĕр-пĕринпе ăмăртаҫҫĕ. Кунпа пĕрлех ҫекци членĕсем те ăмăртуна тухнă.

Уйрăмăнах ăмăртура уйхир, финанс тата културă ҫекцисем лайăх ĕҫлесе пыраҫҫĕ. Уйхир ҫекцинче пурĕ 13 ҫын. Вĕсем пурте колхоз председателĕсемпе бригадирсем тата уй-хир ĕҫĕнчи стаханăвцăсем. „Тимĕр ҫырми“ колхоз (председателĕ Н. Чеменцăв йулташ) 1937 ҫулта ҫĕре ҫемҫетмели мĕн пур минераллă ҫăнăхсемпе усă курса агротехника кăтартăвĕсене пăхăнса пынипе, гектартан 140 пăт тĕштырă туса илме пултарчĕ. „Тимĕр ҫырми“ колхоз 1938 ҫулта кашни гектартан 150 пăтран кайă мар тĕштырă туса илме шутлать.

Ҫекци членĕсем йалхуҫалăх ĕҫĕнче малта пыракан стаханăвцăсемпе ударниксен республикăри слĕтне колхозниксемпе колхозницăсене, тракторисcене, комбайнерсене, агрономсене тата МТС-сенче ĕҫлекенсене чĕнсе каланине сӳтсе-йавнă. Ҫекци вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тухрĕ.

Йалсоветне кĕрекен колхозсенче вăрлăхсене суртлă вăрлăхпа улăштарса трийерпа тасатса хунă. Йалхуҫалăх машинĕсене йусаса ҫитернĕ. Минераллă ҫăнăхсене 4.5 центнер кӳрсе килнĕ.

Финанс ҫекцийĕ те хăйĕн ĕҫне лайăх туса пырать. Вăл уй-хир ҫекцийĕпе ăмăртать. Ҫекци руководителĕ Башкиров йулташ членсем хушшинче массăлă ĕҫе анлăн сарса пырать.

„ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели“ займ укҫине 90 процента йахăн пухнă. Апрелĕн 1-мĕшне 100 процентĕпех пухса ҫитерессишĕн кĕрешеҫҫĕ.

Културă ҫекцине Вера Томасăвă йулташ йĕртсе пырать. Вăл пуҫарнипе агитаципе пропагандă тата културлă-массăлă ĕҫе ҫӳлти вырăна лартнă. Ку ĕҫе йĕркелесе пыма йатарласа ĕҫ планĕ тунă.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренме колхозсенче 8 кружок организациленĕ. Кружоксене комсомолецсемпе учителсем йĕртсе пыраҫҫĕ.

Йалсоветĕнче хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕҫ те лайăх пулса пырать. Хутла пачах пĕлменнисене ҫитес кунсенчех вĕрентсе кăлараҫҫĕ. Ҫавăн пекех хутла сахал пĕлекенсене 36 ҫынна вĕренĕве йавăҫтарнă.

Гер. Шчербаков.

Йалпо ĕҫне тĕпренех ҫĕнетмеле

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанаш йалповĕ пайщиксем умĕнче отчот туса пачĕ.

1937 ҫулхи таварҫавăрнăш планне йалпо 78 процент кăна тултарнă. Йалпо членсен шутне ӳстермест. Пай укҫине те пухмасть. Ҫмирнов тата Федăрăв прикашчиксем пасарсене тухса сутă тумаҫҫĕ, ҫавăнпа вĕсем таварҫавăрнăш планне тултарман. Йалпо правлени председателĕн заместителĕ Д. Меледейкин тавар илме кайсан йаланах ĕҫсе ҫӳренĕ.

Таварсем кӳрекенни Й. Ваҫилйев кайман таварсене пит нумай илсе тултарнă. Ҫаксем пурте тавар ҫавăрнăшне чарса пынă.

Йалпо растратчиксемпе кĕрешмен. Устинăв прикашчик (Кив Атикасси) 1700 тенкĕ, Ҫмирнов прикашчик (Ҫĕн Атикасси) 600 тенкĕ растрата тунă. Ҫапла пурĕ 5600 тенкĕ растрата пулнă.

Ҫав вăхăтрах Хусанушкĕн йалĕнчи прикащчик Кокшайкин йулташ примерлă ĕҫлесе пынă. Вăл таварҫавăрнăш планне 108 процент тултарнă. Анчах унăн ĕҫ меслечĕсене йалпо правленийĕ ытти прикашчиксен патне ҫитерме шутламан. Йалпо правленийĕ пайщиксемпе тачă ҫыхăнса тăмасть, отчотсем сайра пулаҫҫĕ,—ҫавна пайщиксем хытă сивлеҫҫĕ.

Ф. Каттай.

Столовăй йапăх ĕҫлет

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строителствинче ĕҫлекенсенчен хăшпĕр чухне: „столовăй начар ĕҫлет, ларйокра нимĕн те ҫук“ тенĕ сăмахсене илтме пулать.

Чăнах та ларйокпа столовăй йапăх ĕҫленине фактăсем лайăх кăтартса параҫҫĕ. Акă рабочисем кăнтăрлахи апата кайаҫҫĕ. Столовăйĕнчи работниксем мĕшĕлтетсе ĕҫленĕрен кунта темиҫе сехет хушши кĕтсе ларма тивет. Хăшпĕр чухне тата, апатне сахал пĕҫернĕ пирки, ҫимесĕр йулма та пулать.

Столовăйĕнче таса мар, лармали вырăнсене йĕркене кĕртмен. Ҫитменне тата апат-ҫимĕҫсен пахалăхĕ те начар.

Строителствăн хăйĕн куҫса ҫӳрекен ларйок пур. Анчах ларйокра ĕҫлекен Максимăв йаланах ĕҫсе ҫӳрет. Час-часах ларйок хупă тăрать. Вăл рабочисене кирлĕ таварсем илсе килсе сутассишĕн те тăрăшмасть. Ларйокра ҫăкăр тата ытти ҫимелисем ҫителĕксĕр пулаҫҫĕ. Ҫавăн пиркийĕх тепĕр чухне рабочисем ҫăкăр илме 3—4 ҫухрăмри йалсене кайаҫҫĕ.

Ҫаксем ҫинчен строителствă руководителĕсем те пĕлеҫҫĕ. Анчах вĕсем ĕҫе йусассишĕн хыпăнмаҫҫĕ.

Л. Максимăв.

Максим Горький

ШЧУРОВ ХУҪА

(„Фома Гордейев“ повеҫрен)

Цĕр ирхине, биржăна пырсан, Фома хреснашшĕне курнă.

— Анани килнĕ...—тенĕ хреснашшĕ.— Сана чĕнет... Каспаларах кайса кил, анчах асту... Ĕҫсем пирки пĕлесшĕн пулса, вăл сана чĕлхĕне сулла-сулла йарĕ, асту,—ан йантăра. Питĕ чейе вăтă шуйттан... Сăвăплă тилĕ пек... Куҫĕсемпе пĕлĕт ҫине пăхать, аллисене сан хĕве чиксе йарать. Сыхлан, йĕнчĕксĕр туxса килĕн!..

— Нарăм пур-им ăна пирĕн?—ыйтнă Фома.

— Пулмасăр. Баржăшăн тӳлемен, тата нумай пулмасть, пилĕк петтерик вутă илнĕччĕ... Пурне те пĕр тăрук илесшĕн пулсан—ан пар. Укҫа вăл—силĕмлĕ йапала: сапăн аллăнта мĕнчухлĕ ҫаврăнать, ҫавăн чухлĕ ун ҫумне тата хутшăнать...

— Ытах хистесех ыйтсан, ăстан памалăр тăрас?

— Вăл йĕре-йĕрĕ ыйтсан... ессĕ те макăр—анчах ан пар!

Анани Саввич Шчуров вăрманпа ҫутуллӳ тăвакан пуйан хуҫа пулнă, вăл пысăк лесопилкă тытнă, баржăсем тӳтарнă, сулăсем йухтарнă... Унăн Игнатпа ĕлĕкрен ĕҫлĕ ҫыхăну пулнă, ҫавăнпа та Фома ҫакă йаштакă хыр пек вăрăм пӳ-силĕ, пысăк сухаллă, вăрăм алăлă шурă старике пĕрре кăна мар курнă. „Вăрман пуйанĕ“ таса ĕҫпе мар пуйнине, тата хăйĕн килĕнче,—вăрман ҫĕрĕнчи пĕр тĕттĕм йалта,—аван мар пурăннине Фома ҫынсенчен нумай илтнĕ пулсан та, ҫапах,—ҫакă хитре пӳ-силĕ, уҫă сăн-питлĕ, таптаса куҫлă пысăк старике курсан,—унăн ăна ирĕксĕрех хисеплес килнĕ. Фома ашшĕ каланă тăрăх, Шчуров ҫамрăк чух чуҫăн пурăннă. Тепле масарла, унăн патне шĕр таркăн катăршник пырса йернĕ. Шчуров ăна хăйĕн пахчинче мунчара пытарса усранă. Таркăнĕ суйа укҫа тăвакăнскер пулнă иккен,—ҫакăнтан вара Анани пуйа пуҫланă. Пĕрре Шчуровăн мунчи ҫунса кайнă. Пушар хыҫҫăн, кĕл ăшĕнчен кăмрăкланса кайнă ҫын вилли тухнă. Вилен пуҫчашки ҫурăк пулнă. Йал ҫине йат тухнă тăрăх, ҫак ĕҫ пĕтĕмĕшпех Шчуровран килнĕ. Кун пек халапсем хулари ытти пуйансем ҫинчен те ҫӳренĕ,—пурте вĕсем хăйсен мĕлйунĕсене ҫаратупа, вĕлерӳпе тата—чи нумайĕ—суйа укҫа ҫаптарнипе пуҫтарнă пулать. Фома ҫакăн пек калаҫусене мĕн ачаран илтсе ӳснĕ,—тĕрĕси вĕсем, тĕрĕс мар-и—ун ҫинчен вăл нихăҫан та шухăшламан.

Шчуров ҫинчен вăл тата та пĕлкеленĕ. Старик хăйĕн ĕмĕрĕнче икĕ арăм пушкарнă. Пĕри вĕсенчен туй хыҫҫăн малтанхи касах Анани ытамĕнче вилсе выртнă. Тепри—хăйĕн кинĕ пулнă, вăл ăна ывăлĕнчен туртса илнĕ. Ывăлĕ хуйхăпа ĕҫке йернĕ, ĕҫе-ĕҫе кĕҫех пуҫне ҫимен, анчах вăхăтра тăна кĕрсе, Иргиз ҫинчи мăнастире ҫăлăнма тухса кайнă. Йерĕшке кинĕ вилсен, Шчуров ыйткаласа ҫӳрекен чĕлхесĕр хĕре илештернĕ, вăл халĕ те унпа пурăнать, хĕр ăна вилĕ ача ҫуратса панă... Анани патне гостиницăна кайнă чух, Фома ҫаксене, хăйĕн ашшĕнчен тата ытти ҫынсенчен илтнĕ сăмахсене, тепĕр хут аса илнĕ, вара Шчуров ăна темĕнле хăйне манер тĕлĕнтермĕш ҫын пек туйăна пуҫланă.

Фома, хуллен кăна алăка уҫса, Шчуров йышăннă номĕре кĕнĕ те, хуҫана хисеп суннăн алăк патнех чарăнса тăнă. Номĕр пĕчĕккĕ пулнă, унăн пĕртен-пĕр чӳрели витĕр, кӳршĕри ҫуртăн тутăхнă ҫивиттисĕр пуҫне, нимĕн те курăнман. Шчуров тин ҫех сывăрса тăнă пулнă, вăл, аллисем ҫине тĕрленсе, кравать ҫинче ларнă, ҫĕрелĕ аванса пăхнипе, вăрăм та шурă сухалĕ ун чĕркуҫҫи ҫине тăсăлса выртнă. Анчах, авăннă пулсан та, вăл темĕн пысăкĕш курăннă.

— Кам унта?—пуҫне ҫĕклемесĕр, хăйăлтатакан сасăпа ыйтнă Анани.

— Епĕ. Аван-и, Анани Саввич!..

Старик майĕпен пуҫне ҫĕкленĕ те, пысăк куҫĕсене хĕсĕнтерсе, Фома ҫинеле пăхнă.

— Игнат ывăлĕ-и?

— Ҫапла, ҫавă...

— Ну... Лар ҫавăнта, чӳрече патнеле,—пăхăпăр ес мĕнле иккенне! Чейпе хăналас пулĕ!

— Пăсмĕччĕ...

— Коридорнăй!—кăшкăрнă старик кăкăрне карăнтарса. Унтан, сухалне ывăҫласа тытнă та, ним чĕнмесĕр, Фомана сăнама пуҫланă. Фома хăй те ун ҫинеле ҫамка айĕпе пăхса тăнă.

Старикĕн ҫӳлĕ ҫамки йăлтах урлăн та пирлĕн пĕркеленсе тăнă. Кăвакарнă кăтра ҫӳҫ пайăркисем тăнлавĕсене, шӳрĕке хăлхисене витсе тăнă; кăвак та лăпкă куҫĕсем пичĕн ҫӳлти пайне ăслă, тивлетлĕ сăн панă. Анчах тутисем ун хулăм та хĕрлĕ пулнă, вĕсем старикĕн пичĕ ҫинче йутăн курăннă. Вăрăм та ҫӳхе сăмси, айалала авăнса кĕпĕскер, шурă мăйăхсен хушшине тарса пытанасшăн пек курăннă; старик тутисене уҫкаланă чух, вĕсен айĕнчен вичкĕн сарă шăлсем йăлтăртатнă. Сийĕнче ун хĕрлĕ хăмач кĕпе пулнă, пилĕкне пурҫăн пиҫихи туртса ҫыхнă, хура шăлавар ҫинчен атă тăхăннă. Фома, унăн тутисем ҫине пăхса,— старик,—ун ҫинчен ҫынсем мĕнле калаҫҫĕ, шăп ҫавăн пекех пуль,—тесе шухăшланă.

— Ача чухне аҫу сăнĕ ытларахчĕ санра, хаь апла мар!—сасартăк каласа хунă Шчуров, унтан ассăн сывласа илнĕ. Вара, пăртак тăхтаса тăрсан:—Аҫуна астăватăн-и? Кĕлтăватăн-и уншăн?—тесе ыйтнă. Фоман кĕске ответне итлесен:— Кĕлтăвас пулать, кĕлтăвас пулать!—тесе сăмахне малала тăснă:—Шутсăр ҫылăхлă ҫыннччĕ Игнат... вилесее те ҫылăхне касарттармасăрах вилнĕ... пӳкле пулнă... питĕ ҫылăхласкерччĕ!

— Ыттисенчен те ҫылăхларах мар пулĕ те ĕнтĕ,—шăмарса ответленĕ Фома, ашшĕшĕн кӳренсе.

— Камран ытлашши мар пулĕ, тен?—чурăссăн ыйтнă Шчуров.

— Сахал-и ҫылăхлисем!

— Вилнĕ Игнатран ҫылăхларахи тепĕр ҫын пур ҫĕр ҫинче,—сан хреснаçу, Йашкă, ылханлă фармазон...—сăмахне пат татса каланă старик.

— Кăна есĕр чăнах та пĕлетĕр-и вара?—тесе, кулкаласа ыйтнă Фома.

— Епĕ-и? Епĕ пĕлетĕп!—пуҫне ухса, ĕнентерӳлĕн каланă та Шчуров, унăн куҫĕсем тĕксĕмленсе кайнă.—Еп кам та турă умне ҫăмăлшах тăрас ҫук... Унăн светтуй сăн-пичĕ умне манăн та йăвăр ҫĕклемпе пымала... Сахал мар йĕпатнăҫке епĕ те шуйттана... анчах еп туррăн ырă кăмăлне ĕненетĕп. Йапкă пур, тĕлĕке те, райа та, тамăка та ĕненмест... Турра та ĕненмест вăл... лайăх пĕлетĕп еп ăна! Ҫакăншăн вара, турра ĕненменшĕн, унăн ҫĕр ҫинчех айăпланма тивет.

— Кăна та пĕлетĕр-и есĕр?—ыйтнă Фома.

— Кăна та... Ан та шухăшла, тăна ман сăмахсем кулăшла туйăннине те пĕлетĕп еп... Йепле витĕр куракан, тетĕн пуль! Анчах нумай ҫылăх тунă ҫын—йаланах витĕр пĕлет. Йаланах ăслă... Ҫылăх вĕрентет вăл. Ҫавăнпа Йапкă Майакин етем-меслетсĕр ăслă та...

Старик ĕнентерӳлĕн хăйăлтатса калаҫнине итлесе, Фома:

— Ахăрнех, ку вилĕмне сисет пуль,— тесе шухăшласа илнĕ.

Коридорнăй,—шурăхнă, ҫĕткеленнĕ сăнпитлĕ пĕчĕк ҫын,—сăмавар йăтса кĕнĕ те, хăвăртрах калла, вĕттĕн-вĕттĕн пуҫа, чупса тухса кайнă. Старик, чӳрече патнеле кармашса, темĕнле ҫыхăсене салтма тытăннă, хăй, ҫав вăхăтрах, Фома ҫине пăхмасăр:

— Чăрсăр ес...—тесе сăмахне тăснă.— Куҫусем те, темĕнле—тĕксĕм... Ĕлĕк сутă куҫлă ҫынсем нумайрахчĕ... ĕлĕк чунсем те сутăрах пулнă... Ĕлĕк пурте уйрăм-уҫҫилĕ пулнă—ҫынсем те, вĕсен ҫылăхĕсем те... халĕ пур—никам ăнкарса илес ҫук... ехе-хе!

Старик, чей пĕҫернĕ те, Фомана хирĕҫ вырнаҫса ларнă.

— Сан ҫулăнта,—тенĕ вăл, келлех сăмахне тапратса,—аҫу шывуҫлавҫи пулса ĕҫлетчĕ, вĕсен караванĕ пирĕн йал патĕнче тăратчĕ... сан ҫулăнта Игнат кĕленче пек витĕр курăнатчĕ... Пĕрре пăхса вăл мĕнле ҫын иккенне пĕлме пулать. Акă сан ҫине те пăхатăп, анчах ес камне кураймастăп. Мĕнле ҫын-ха ес? Ҫакна ес, йĕкĕт, ху та пĕлместĕн... ҫавăнпа пĕтетĕн те... Халĕхи ҫынсем пурте пĕтмеле, мĕншĕн тесен—хăйсем камне пĕлмеҫҫĕ. Пурнăҫ вăл—аскăнулă тăвăл, машинийĕнех умра хăйне валли ҫул туппа пĕлмеле... ăста вăл, ҫав ҫул? Аташаҫҫĕ вара... шуйттаншăн—савăнăҫ... Авланнă-и ес?

— Ҫук-ха,—тенĕ Фома.

— Акă ес... авланман, ху ҫапах вăраланнă пуль ĕнтĕ... Ну, ĕҫӳсем мĕнле?.. Нумай ĕҫлеме тивет-и?

— Тивкелет... халĕхе еп хреснаттепе-ха...

— Сирĕн халĕхи ĕҫсем мĕнех вĕсем?—пуҫне суллаcа каланă старик. Куҫĕсем ун пĕр тĕксĕмленсе, пĕр ҫуталса выляса тăнă.—Нимĕнле ĕҫ те ҫук сирĕн! Ĕлĕк купец лашапа ҫӳренĕ... тăман-и, тăвăл-и, касҫ-и, ҫĕрле-и... кайнă! Ҫул ҫинче ăна вăрă-хурахсем сыхласа тăнă, вĕлернĕ... асапланса вилнĕ вăл, ҫылăхĕсене йунпа ҫуса тасатнă... Халĕ вагонта ҫӳреҫҫĕ... депешсем валеҫеҫҫĕ... йе ав тата, пыр та кур,—кантуртан калаҫать—сасси пилĕк ҫухрăма илтĕнет... кӳ ĕнтĕ, тем каласан та, шуйттан ăсĕсĕр пулман! Ларать етем... хусканмасăр ларать... кичем ăна, ҫавăнпа, ĕҫ ҫукран, ҫылăха кĕрет те: пĕтĕмпех уншăн машинă тăвать... Тертленмели ҫук ун. Терт пулмасан—етеме вилĕм вара! Вăл ав машинăсем туйанса пĕтернĕ те,—аван, тет пуль! Пăхăсăн, леш-хайхи, машинĕ тени—шуйттан капкăнĕ иккен! Тертленсе ĕҫленĕ чух ҫылăха кĕме вăхăт ҫук, машинă пулсан—ирĕк! Ирĕкпе пĕтет етем, хĕвел ҫине тухнă ҫĕр хурчĕ пек, пĕтет!.. Ирĕк пĕтерет етеме, ирĕке пула—пĕтет!

Ҫак сăмахсене татса, ҫирĕплетсе каласа, Анани старик шĕвĕр пӳрнипе сĕтеле тăвăтă хутчен ҫапса илнĕ. Пичĕ унăн усал савăнăҫпа ҫуталса тăнă, кăкăрĕ ҫĕклене-ҫĕклене кайнă, кĕмĕл-сухалĕ, кăкăр ҫĕкленнĕ май, чĕрĕ пек йăшăлтатнă. Фома, ăна итлесе темĕнле сехĕрлĕх туйнă, старикĕн сăмахĕсенче кисренми ĕненӳ йантăранă, ҫак ĕненӳвĕн вăйĕ Фомана пăлхантарнă. Вăл ĕнтĕ старик ҫинчен ҫӳрекен сăмахсене те, хăй пасăр анчах вĕсен чăнлăхне ĕненнине те—йăлтах манса кайнă.

Анани, Фома хыҫĕнче тепĕр ҫын пытанса тăнă пек, ун ҫине тĕлĕнтермĕшлĕн пăхнă, лешне, Фома хыҫĕнче тăраканнине старикĕн сăмахне итлеме асап та хăрушă пулнă пек, унăн асапне курa, старик киленсе кайнă пек туйăнса тăнă.

— Пурне те сире, халĕхи ҫынсене ирĕклĕх пĕлтерет... Сире шуйттан йарса тытнă... вăл сирĕн аларти ĕҫе туртса илнĕ, ĕҫ вырăнне машинăсем тата депешсем панă... Ну-ка, кала-ха, мĕншĕн ачисем ашшĕсенчен кайарах? Ирĕк илнипе! Ҫавăнпа, ĕҫке йаранса, хĕрарăмсемпе ашкăнса ҫӳреҫҫĕ те...

— Ну,—шăппăн каланă Фома,—ĕҫесси-ашкăнасси ĕлĕк те халĕхинчен кайах пулман...

— Чĕнмесĕр ларасчĕ!—куҫĕсене хăйарлăн ҫиҫтерсе, кăшкăрса ларахнă Анани.—Ун чух етемре вăй ытларах пулнă... вăй тăрăх—ҫылăхĕсем! Ун чух ҫынсем—йумăн пек пулнă... Турăран килекен суд та вăйа кура пулать. Виҫсе пăхĕҫ ангелсем вĕсен ӳтне, тайтарĕҫ йунне... курĕҫ вара турă ангелĕсем—вĕсен ҫылăхĕ ӳтпе йун йăвăрĕшĕнчен ытла маррине... ăнлантăн-и? Кăшкăр сурăха тытса ҫисен, турă ăна айăп тăвас ҫук... анчах ирсĕр йĕкехӳре сурăх тĕлĕшпе айăпа кĕрсен, ăна турă касарас ҫук!

— Турă мĕнле тӳре тăвасса ăҫтан пĕлчĕр-ха етемсем!—шухăша кайса ыйтнă Фома.—Куҫа курăнакан суд кирлĕ...

— Мĕншĕн куҫа курăнаканни?

— Ҫынсем ăнланччăр, тесе...

— Турăсăр пуҫне, кам суд пултăр-ха маншăн?

Фома старик ҫине пăхса илнĕ те, пуҫне усса, нимĕн те шарламан. Ăна Шчуров сунтарса вĕлернĕ хăйхи таркăн аса килнĕ,—ку чăнахах та ҫапла пулнине Фома каллех ĕненнĕ. Хĕрарăмсене те —

Алӑстаҫсен ҫулахи канӑвӗ

Чӑвашпромкасса кӑҫал алӑстаҫсене курортсемпе санаторисене тата канмалли ҫуртсене йама путьовкӑсем илме 135 пин. тенкӗ укҫа уйӑрнӑ. Уйӑрӑмӑн илсен, ҫак укҫапа 55 ҫынна курортсене, 103 ҫынна санаторисене, тата 1135 ҫынна Кувшинкӑри канмалли ҫурта йама палӑртнӑ.

Кӑҫал тата Кувшинкӑра пӗр кунхи канмалли ҫурт пулать. Унта 387 ҫын канмала. Унсӑр пуҫне Чӑвашпромкасса 50 ҫынна екскурҫине, 22 ҫамрӑка пионерсен лагерне йама палӑртнӑ.

Хальхи вӑхӑтра Кувшинкӑри канмалли ҫурта аслӑлатас ӗҫ пырать. Йусаса аслӑлатма тата ҫӗнӗрен спорт инвентарӗсем, культур хатӗрӗсем туйанма 75 пин тенкӗ укҫа уйӑрнӑ. Кӑҫал канмалли ҫуртра ҫӗнӗрен шыва кӗмели, ташламалли площадкӑсем, тата хаҫат-журналсем вуламалли вырӑнсем пулаҫҫӗ. Шупашкар пристанӗпе килӗшнӗ тӑрӑх канмалли ҫурта вырӑнта ҫӳрекен пӑрахутсем чарӑнса тӑраҫҫӗ. Халӗ пристане туса ҫитереҫҫӗ те ӗнтӗ.

М. Т.

Станочницӑ-стахановкӑсем

Шереметйӗвӑ йулташ Ҫӗмӗрле комбинатӗнче 1930 ҫултанпа ӗҫлет. Малтанхи ҫулсенче уборщицӑра, унтан подручнӑйӗнче ӗҫленине халӗ те лайӑхах астӑвать вӑл. Специальнӑҫ пулмӑн унӑн. Мӗн хушнӑ—ҫавна тунӑ.

Хальхи вӑхӑтра Шереметйӗвӑ йулташ стольарнӑй цехра „цепнодолбежный“ станок ҫинче ӗҫлет. Унӑн алли витӗр кашни куллен темиҫе ҫӗр сӗтел-пукан пайӗсем кӗрсе тухаҫҫӗ. Вӑл вӗсене йака тӑвать, тикӗслет, пӗр виҫелӗ тӑвать. Унӑн брак пулмасть. Техникӑна алла ҫавӑрса илни пӗр хӑрамасӑр хавасланса ӗҫлеме пулӑшать. Ҫавӑ май Шереметйӗвӑ йулташ кашни кунах ӗҫ нормине 200 процент таран тултарса пырать.

Пӗр-икӗ ҫул кайала Шереметйӗвӑн уйӑхри ӗҫукҫийӗ 100—150 тенкӗ шутланнӑ, халӗ 250 тенкӗрен кайа мар илет вӑл. Пурнӑҫ условийӗ те тӗпрен улшӑнса пырать. Унӑн хӑйӗн таса та илемлӗ пӳлӗм пур. Тӑхӑнмалли, выртса-тӑмалли тата ытти хуҫалӑхра кирлӗ йапаласем ҫителӗклӗ. Кӗнекесем те сахал мар. Ӗҫ хыҫҫӑн, спектакль, кино курма каймасан, вӑхӑта кӗнеке-хаҫат вуласа ирттерет.

Шереметйӗвӑ пек хастарлӑ хӗрарӑмсем стольарнӑй цехра сахал мар. Вӗсен йышӗ куллен ӳсет. Акӑ, Малахайӗвӑ йулташа илер. Вӑл малтанах уборщицӑра ӗҫленӗ, халӗ станочницӑ. Ӗҫре Шереметйӗвӑпа ӑмӑртать. Договӑрта кӑтартнӑ тӑрӑх кашни кун вӗсен нормӑна 150 процентран кайа мар тултармала, простой, брак тумала мар, станока таса тытмала. Ҫакна вӑл ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать. Брак, простой тӑвассине пачах пӗтернӗ. Йулашки кунсенче нормӑна 210 процент таран тултарса пыма пуҫларӗ.

И. Николайӗв.

Халӑх йуррисем

СТАЛИН ҪИНЧЕН ХУНӐ ЙУРӐ

Ҫӳлӗ-ҫӳлӗ тусем ҫийӗн
Ӑмӑрткайӑк йарӑнать.
Нимӗнле вӑй тытса чармӗ
Йарӑнмашкӑк хаљ ӑна.

Тӳперен ҫӳле вӗҫетпӗр,
Сар хӗвел ҫиҫет питре.
Ӑмӑрткайӑк—Аслӑ Сталин
Ҫул йертсе пырать пире.

Йурӑпа ҫӗршыв йанратӑр
Ҫак ҫунатлӑ сехетре.
Пирте Сталинӑн ҫӑмахӗ,
Сталин ӗҫӗ пирӗнпе.

Шыв-шурсем пире пуҫ тайрӗҫ,
Чечекленчӗҫ уй-хирсем.
Заводсем йурра пуҫларӗҫ,
Ҫӗнелсе пырать ҫӗршыв.

Ыткӑнать мала пӗр харӑс
Большевикла хурҫӑ ҫар.
Ӑмӑрткайӑк—хурҫӑ Сталин
Ҫул йертсе пырать хастар.

Пурнӑҫ вутлӑн та хӗвеллӗн
Ҫиҫет кашнин чӗринче.
Пирте Сталинӑн ҫӑмахӗ,
Сталин ӗҫӗ пирӗнпе.

М. Рыльский.

КРАСНОГВАРДЕЙӖЦСЕН ЙУРРИ

1

Ешелонсем умлӑн-хыҫлӑн,
Ешелонсем умлӑн-хыҫлӑн...
Ҫулӗ аслӑ, сарлака!
Командир хушать,—кайатпӑр,
Алӑ сулса уйӑрлатпӑр,
Дон—тӑванӑмӑр, сыв пул!

2

Ҫарти пурнӑҫ, Ворошилӑв,
Йксӗмӗре туслантарчӗ,
Ҫарта пиҫрӗмӗр пӗрле...
Асӑнать тӑшман салхулӑн
Шур Калитвӑ вӑрҫине те,
Калач станци вӑрҫине.

3

Ак Царицын, ак Царицын,
Унӑн епӗр ҫапӑҫатпӑр,
Хӗҫсене выльантарса...
Ҫӑмӑр шывӗ те ҫӑваймӗ—
Айлӑмсем те лакӑмсем те
Шӳрӗҫ халӑх йунӗпе.

4

Командир хушать,—кайатпӑр,
Алӑ сулса уйӑрлатпӑр,
Дон—тӑванӑмӑр, сыв пул!
Ешелонсем умлӑ-хыҫлӑн,
Ешелонсем умлӑн-хыҫлӑн...
Ҫулӗ аслӑ, сарлака!

Вырӑсларан Тукташ куҫарнӑ.

Забайкалйӗ йурри

1

Мӗн пур Забайкалйӗ йурпа шӑлӑнатҫке,
Йура купалатҫке тискер ҫавра-ҫил.
Даур тӑвӗсем те, манчжур ҫырмисем те
Асрах тытӗҫ ӗмӗр манми похода.

2

Вӗҫет вӗҫенкайӑк шап-шур хирсем ҫийӗн,
Пӗр лӑпкӑн сывлаҫҫӗ телейлӗ ҫуртсем.
Салам, Забайкалйӗ, салам йалсене те!
Совет Хӗвелтухӑҫӗ—аслӑ ҫӗршыв.

3

Ҫӗршывӑмӑр вайла, епӗр ҫӗнтерӳлӗ,
Ватти те, вӗтти те—никам йулмиччен—
Ҫӗкленӗҫ пӗр харӑс. Тӑшман тапӑнсан та
Пире ҫӗнтерейме нимле вӑрҫӑра.

4

Тӑшман сирпӗнейӗ совет чиккисенчен...
Йура купала та йурла, лӑпкӑ ҫил!
Ӳсех, Забайкалйӗ, ан ман, йал ҫынни ес,
Хӗвелтухӑҫнеҫке сыхлать Хӗрлӗ Ҫар!

С. Алымов.

Пирӗн ӗмӗт пурнӑҫа кӗчӗ

1937 ҫулта епӗр Чӑвашсен Тӗп аероклубӗнчӗ вӗҫев ӗҫне вӗренме пуҫларӑмӑр.

Вӗреннӗ ҫӗрте нумай йӑварлӑхсем тӗл пулчӗҫ, анчах епӗр йӑвӑрлӑхсенчен хӑрамарӑмӑр. Вӗҫев ӗҫне тӑрӑшса вӗрентӗмӗр.

Ҫуллахи ир хӗвел тухнӑ-тухман епӗр пӗр ҫемйе пек ӗҫлеме тытӑнатпӑр. Акӑ самольотсем ҫӑмӑллӑн сывлӑша хӑпарса кайрӗҫ... Киле таврӑннӑ чухне, ывӑннӑ пулин те, пурте хаваслӑ. Кашнинех хӑйӗн шухӑшӗсене йултӑшӗсене каласа кӑтартас килет.

Акӑ епӗр самольота тытса пыма вӗрентӗмӗр. Епӗр питӗ хавас, пирӗн ҫумра инструктӑр лармасть, пӗтӗм шанчӑк хӑмӑрта ҫеҫ.

Вӗҫев ӗҫне вӗренсе ҫитрӗмӗр. Пирӗн екзамӗн тытмала. Екзамӗне епӗр хавасланса кӗтсе илтӗмӗр. Комиҫҫи умӗнче епӗр хамӑр вӗреннисене кӑтартрӑмӑр. Комиҫҫи пирӗн ӗҫе лайӑх тесе йышӑнчӗ. Унӑн епӗр хытӑ хӗпӗртерӗмӗр.

Кунта вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн нумайӑшӗ сывлӑш-ҫар вӑйӗсен чаҫӗсене, инструктӑрсен шкулӗсене вӗренме кайаҫҫӗ. Епӗр малашне те авиаци ӗҫне тӑрӑшсах вӗренӗпӗр. Епӗ чӑваш ҫамрӑкӗсене, чӑваш хӗрӗсене авиаци ӗҫне вӗренме чӗнетӗп. Епӗр телейлӗ вӑхӑтра пурӑнатпӑр. Пирӗн ҫӗршывра ҫеҫ ҫамрӑксене вальли пур ҫӗрте те ҫул уҫӑ. Епӗр хамӑрӑн социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыва хытӑ йуратапӑр. Кирлӗ пулсан унӑшӑн ҫапӑҫма, вилме те хатӗр.

Сывӑ пултӑр Совет Сойузӗ! Сывӑ пултӑр коммунисла парти! Сывӑ пултӑр ӗҫхалӑхӗн аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташ!

Пилот К. Виктӑрӑвӑ.

Ҫитӗннисене вӗрентессипе йапах ӗҫлеҫҫӗ

Трак. Тусай йалсоветӗнче хутла пӗлменнисемпе сахал пӗлекенсем 100 ҫынна йахӑн шутланаҫҫӗ. Вӗсене вӗрентме райсутӗҫ пайӗ Кольцов йулташа хушнӑччӗ. Вӑл ӗҫе лайӑххӑн тытӑнмарӗ. Ку тарана ҫитсе те 34 заньати ҫеҫ туса ирттернӗ. Заньатисенче 3—4 ҫын кӑна пулаҫҫӗ.

Ҫитӗннисене шкула ҫӳретессипе йалсовет ҫумӗнчи хутла пӗлменлӗхпе кӗрешекен секци те ӗҫлемест.

Мак. Иванов.

42 агитатӑр вӗренсе тухрӗҫ

ПСК(б)П Елӗк райкомӗ февраль уйӑхӗнче 10 кунлӑ курс урлӑ 34 агитатӑр вӗрентсе кӑларчӗ. Мартӑн 21-мӗшӗнче татах 42 агитатӑр 10 кунлӑ курсран вӗренсе тухрӗҫ.

Халӗ ку агитатӑрсем йалсенче колхозниксемпе йединоличниксене РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламалли Положенисене ӑнлантарса параҫҫӗ.

Филиппӑв.

1938 ҫулти ҫураки умӗн

Воронцӑвӑ-Александровски машинӑ трактӑрлӑ станцинче (Орджоникидзе крайӗ).
Укерчӗк ҫинче: Слесӑр-стахановец И. Шевченко йулташ тракторсем йусас ӗҫре

С. Петродан фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

„Ҫӗнӗ ҫул“ колхоз тукташсенчен малта

Хитекушкӑнӗнчи „Ҫӗнӗ ҫул“ колхоз (Елӗк р.) 1938 ҫулта кашни гектартан 120 пӑтран кайа мар тӗштырӑ туса илессипе Мӑн Тукташри колхозпа социалисӑмлӑ ӑмӑртса ӗҫлет. Колхоз кӑҫалхи ҫул пӗтӗмпех суртлӑ вӑрлӑх акма палӑртнӑ. Пайанхи куна „Московскайа А—315“ суртлӑ сӗлӗ 210 центнер, „Капитал“ пӑрҫана 15 центнер, „Тарелочнайа“ суртлӑ йасмӑка 7 центнер, „Лӳтесценс“ йатлӑ ҫурхи тулӑ 33 центнер улӑштарса суртласа хунӑ. Акмалли вӑрлӑхсен пахалӑхне тӗрӗслеттерсе пӑхнӑ хыҫҫӑн акма йурӑхлине палӑртнӑ.

Колхоз ҫӗре ҫемҫетмелли вырӑнти удобренисене те кирлӗ тарӑнах йухса хатӗрленӗ. Йалхуҫалӑх машинӗсене, сӳсмен таврашсене, урапасене йусанӑ. Лашасене ҫураки вӑхӑтӗнче тӑрантарма 250 пӑт посыпкӑ ҫӑнӑхӗ, 4 капан улӑх ути тата сӗлӗ ҫителӗклӗ таранах уйӑрса хӑварнӑ. Начартарах лашасене уйрӑм апат ҫине уйӑрса тӑратнӑ.

Уйрӑмӑнах ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе 1-мӗш бригадӑ (бригадирӗ Скворцов йулташ) малта пырать. Скворцов правлени хушнӑ ӗҫсене вӑхӑтра туса пырать.

Халӗ ҫуракине хатӗрленнӗ май, колхозра агрокружок организациленӗ. Унта бригадирсем, йаровизаторсем, тырӑ акакансем, суха тӑвакансем, стахановецсем вӗренеҫҫӗ. Заньати ернере икӗ хут пулать. Кружокра колхозниксем интересленсе вӗренеҫҫӗ.

Колхозӑн агроплан тӑрӑх 6 гектар ҫинче кантӑра мулчировани тумала, сӗлӗ 30 гектар ҫине йаровизацилесе акмала. Пӗрчӗлӗ тырӑсене пӗтӗмпех машинӑпа акмала.

Вӑрлӑха йаровизацилес йӗнӗпе Филимонӑв йулташ 4-мӗш ҫул ӗнтӗ ӗҫлет. Вӑл колхоза кашни ҫулленех пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илме пулӑшать.

Колхоз председателӗ Куликов йулташ республикӑра малта пыракан стахановецсемпе ударниксен сльотӗнчен таврӑнсан, сльот решенийӗсем ҫинчен колхозниксене тӗплӗн ӑнлантарса пачӗ.

Ҫак вӑхӑтрах „Ҫӗнӗ ҫул“ колхозпа ӑмӑртакан Мӑн Тукташри колхоз кайа йулса пырать. Колхоз председателӗ Матвейӗв „ҫуракине тухиччен тем тумалӑх та вӑхӑт пур“, тесе ларать.

Кунта акмалли вӑрлӑхсем ҫитмеҫҫӗ. Пур пеккине те суртламан. Йалхуҫалӑх машинисене те йусаса пӗтермен. Сӳсмен таврашсем ҫитмеҫҫӗ. Лашасене йапӑх пӑхнипе начарлатса йанӑ.

Ҫавнашкалах Кузнецов тата Львов бригадирсем те ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ. Мӑн Тукташсен „Ҫӗнӗ ҫул“ колхозран кайа йулса пыма нимӗнле сӑлтав та ҫук.

С. Арҫентйӗв.

Хатӗр мар

ЙЕПРЕҪ (хамӑр корр). Колхозсенче ҫуракине хатӗрленес ӗҫ мӗнле пынине тӗрӗслесси анлӑн сарӑлса пырать. Нумай колхозсенче ӑмӑрту договӑрӗсене тӗрӗслесе тухнӑ хыҫҫӑн, ҫуракине хатӗрленес ӗҫ йапӑх пынине, ӗҫре чӑн-чӑн ӑмӑрту ҫуккине кӑтартса параҫҫӗ.

Хумпуҫ Патӑрйелӗнчи „Правда“ колхозра ҫуракине тивӗҫлипе хатӗрленме тытӑнман та.

„Правда“ колхоз ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе Йӗпреҫри Сталин йачӗпе тӑракан колхозпа социалисӑмла ӑмӑрту договӑрӗ тунӑ. Анчах колхозниксем хӑйсем ҫине илнӗ обйазателствӑсем ҫинчен нимӗн те пӗлмеҫҫӗ. Виҫҫӗмӗш бригадӑн бригадирӗ С. Миронов йулташ кӑҫал хӑйӗн бригади миҫе пӑт тӗштырӑ туса илме палӑртнине те пӗлмест.

Колхозра 4 бригадӑ, вӗсенчен пӗри те ӑмӑртува хутшӑнман.

Райҫӗрӗҫ пайӗ панӑ план тӑрӑх, колхозӑн 38 центнер тулӑ вӑрлӑхӗ улӑштармала, пӗр пӗрчӗ те улӑштарман. Акмалли вӑрлӑхсене те суртласа пӗтермен. Аммиаклӑ селитрӑ 26 центнер кӳрсе килнӗ те, шыв анакан сарайне ҫӗр ҫинех пӑрахнӑ. Ҫавнашкалах йалхуҫалӑх машинисене лартнӑ сарайне те шыв анать. Вӑрлӑхсем акма йурӑхлипе йурӑхлӑ маррине тӗрӗслемен.

Т. Майорӑв.

„Заря“ колхозра

ШӐХАСАН. Тури Сурӑмри „Заря“ колхоз акмалли вӑрлӑхсене пӗтӗмпех суртласа хунӑ. 14 центнер пӑрҫа, 12 центнер йасмӑк, 10 центнер урпа, 40 центнер тулӑ алӑпа пӗрчӗн-пӗрчӗн суйласа тасатнӑ.

Кӑҫал колхозӑн 276 гектар ҫуртри акмала. Вӑл шутран 90 гектар ҫинче йаровизаци тумала, 37 гектар ҫинче мулчировани тума, 141 гектар ҫинчи калчана ҫуркунне сӳреме, 50 гектар ҫинче апат пама палӑртнӑ. Халӗ йаровизаци тума 3 амбар тата йаровизаторсене уйӑрса хунӑ. Ҫура тухсан калчасене тислӗк шӗвекӗпе апат пама кашни бригадӑрах пичкесем хатӗрленӗ.

Кашни бригадӑрах ҫирӗп агроплан туса ҫирӗплетнӗ.

Халӗ агрокружок организацилесе 47 колхозника хутшӑнтарнӑ. Вӗсенчен 5 бригадир, 5 машиновед, тырӑ акакансем, сӳре тӑвакансем заньатисене пӗр сиктермесӗр ҫӳреҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех колхозниксем хушшинче кашни бригадӑрах, РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламалли Положенисене тӗплӗн вӗренес тӗлӗшпе агитаторсем, вулавҫӑсем, стена хаҫат редакторӗсем ӗҫлеҫҫӗ.

С. Соколов.

Хурт-хӑмӑр ӑстаҫисем

ҪЕРПӲ. Мартӑн 19-мӗшӗнче районри колхоз шкулӗ ҫумӗнче хурт-хӑмӑр ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекенсен 2 уйӑхлӑх курӑсӗнчен 30 ҫын вӗренсе тухрӗҫ. Вӗсем хушшинче 10 хӗрарӑм. Курсран 27 ҫын „отлично“ тата лайӑх паллӑсемпе, 3 ҫын вӑтам паллӑпа вӗренсе тухрӗҫ. Курсран вӗренсе тухнӑ ҫынсем колхозсенче ӗҫлеҫҫӗ.

А. Иванов.

ШКУЛСЕНЧИ КРУЖОКСЕМ

Шкулсенчи кружоксем ачасен пӗтӗмӗшле пӗлӗвне ӳстерес тата вӗренекенсене обшествӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе хутшӑнтарас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Ҫавна шута илсе Арапуҫӗнчи вӑтам шкулта (Вӑрмар р-нӗ) тӗрлӗрен кружоксем 15 организациленӗ, вӗсенче 472 ача вӗренет. Кружоксенче вӗсем агротехникӑна, фото ӗҫне, литературӑна, химине, политикӑна тата ыттисене те вӗренеҫҫӗ. Пуринчен ытла хор, драмӑ кружокӗсем тата шӑвлӑ оркестр аван ӗҫлет. Ку кружоксенче пӗтӗмпе 119 заньати туса ирттернӗ. Кружок членӗсем пӗтӗмпе тӗрлӗрен хаҫат-журналсем 452 екземпльар ҫырӑнса илеҫҫӗ. Халӗ литкружок членӗсем „Йешӗл вӑй“ йатлӑ журнал кӑларма хатӗрленеҫҫӗ.

Смирнов.

арӑмӗсемпе йерӗшкисене — ҫак старик хӑйӗн йӑвӑр ачашӗпе тупӑка ӑсатнӑ пуль, вӗсене ҫӑмламас кӑкӑрӗпе лапчӑтнӑ пуль, ҫакӑ, хулӑм тутисемпе вӗсен пурнӑҫ сӗткенне ӗмнӗ пуль,—халӗ те, ав, унӑн тутисем хӗп-хӗрлех, калӑн,—вӑрӑм та шӑнӑрлӑ алӑсен ытамӗнче вилнӗ хӗрарӑмсен йунӗсем халиччен те типеймен, тейӗн. Акӑ хаљ вӑл, вилӗм ҫывӑхрах тӑнине сиссе, ӑна кӗтсе хӑйӗн ҫылӑхӗсене хисепе илет, ҫынсем ҫинчен йатлаҫса калаҫать, унтан: кам турӑсӑр пуҫне, манӑн суд пулма пултартӑр! тесе калаҫать.

— Хӑрать-ши вӑл, хӑрамасть-ши?—хӑйӗнчен хӑй ыйтнӑ Фома, унтан, старик ҫинелӗ ҫамка айӗн пӑхса, шухӑша кайнӑ.

— Ҫапла йӗкӗт! Шухӑшла...—пуҫне сулкалаҫа каланӑ Шчуров.—Мӗнле пурӑнасси ҫинчен шухӑшла... О-о-хо-хо! хӑҫантанпа пурӑнатӑп епӗ! Йӑвӑҫсем пӗчӗккӗренех пысӑк пулса ҫитрӗҫ, касӑлса—хуралт пулчӗҫ, хуралтӑсем те кивелнӗ ӗнтӗ... пурте ҫак ман куҫ умӗнче пулса иртнӗ, епӗ ак—ҫав-ҫавах пурӑнап! Хӑш чухне хамӑн пурнӑҫа аса илетӗп те,—неушлӗ пӗр ҫын ҫакӑн чул тума пултарнӑ?—тетӗп. Неушлӗ ҫавӑн чул пурӑнса ирттернӗ еп?...—Старик, пуҫне сулкаласа, Фома ҫине сулхӑмӑн пӑхса илнӗ те, урӑх шарламан...

Пӳлӗмре шӑпах пулнӑ. Чӳрече хыҫӗнче, кӳрӗшри ҫуртӑн ҫивитти ҫинче, темӗскер хуллен чӑкӑртатнӑ; урапасем шавлани, ҫынсем темӗскер калаҫни урамран хӑпарса илтӗннӗ. Сӗтел ҫинчи сӑмавар салхуллӑн йурланӑ. Шчуров чей курки ҫине тинкерсе пӑхса ларнӑ, сухалне шӑлкаланӑ, кӑкӑрӗнче ун темӗскер хӑйалта та-хӑйалтата кайнӑ...

— Йӑвӑр пуль сана асусӑр?—каллех сас панӑ вӑл.

— Хӑнӑхатӑп... —ответленӗ Фома.

— Пуйан ес... Йакку вилсен—тата ытларах пайан, пӗтӗмлех сана хӑварать вӑл. Пӗр хӗр кӑна унӑн... хӗрне те санӑнах илмеле... Хреснай ашшу пулни, иксӗр пӗр тӑван сӗчӗпе ӳсни—чӑрмав мар! Авланас пулать... Мӗн капла пурӑнса? Хӗрсем хыҫҫӑн чупан пуль-ха?

— Ҫук...

— Кала тата! Е-ехе-хе!.. пӗтет купец... Пӗр вӑрман улпучӗ калать,—суйать-и, ҫук-и,—ӗлӗк йӑтӑсем пурте кашкӑр шулнӑ, тет, кайран йӑтта тухнӑ, тет... ҫавӑн пекех,—пирӗн купец та—часах мӗнпурӗ—йӑтта тухӑпӑр... Наукӑсене вӗренӗпӗр, модӑлӑ шлепкесем лартса йарӑпӑр, хамӑр сӑн-сӑпата пӗтерме мӗн кирлӗ, пурне те тӑвӑпӑр... Пире ытти ҫынсенчен нимӗнпе те уйӑраймӑн вара. Ав мӗнле йӗркӗ туса йачӗҫ,—ачасене гимназине вӗренме параҫҫӗ... Купецне те, дворенне те, мешченне те— пурне те пӗр калӑппа шайлаҫҫӗ... Пӗр тӑслӗ тум тӑхӑнтараҫҫӗ, пурне те пӗр наукӑ вӗрентеҫҫӗ... йӑвӑҫ пек, ӳстереҫ етеме... Мӗне кирлӗ вӑл? Никама та паллӑ мар... Вутсыпписем те пурте пӗр пек мар, пӗри—туратлӑ, тепри—йака; кунта ак пурне те савапа саваласах, пӗр сӑнлӑ тӑвасшӑн... Час пире, стариксене, кайук... ҫапла! Тен, тепрер аллӑ ҫулран, сутӑ тӗнчере елӗ... Саввӑ ывӑлӗ Анани, Шчуров хушаматлӑскер... пурӑннине те никам ӗненес ҫук... ҫавӑ-ҫав! Епӗ, турӑран пуҫне, никамран хӑраманнине те шанмӗҫ... Ҫамрӑк чух мужик пулнине, икӗ те чӗрӗк теҫетина ҫӗр акнине, унтан, пурӑна киле, вӑрманӗ-мӗнӗпе вуннӗр пин теҫетина ҫитерника... тата укҫи те икӗ мӗлйунран кайа маррине... ӗненмӗҫӗ ун чухне.

— Пурте ак—укҫа та, укҫа, теҫҫӗ,—кӑмӑлсӑрӑн сӑмах хушнӑ Фома.—вӑл мӗнле савӑнӑҫ кӳрет-ха етеме?

— Мм...—ӗнӗрлесе илнӗ Шчуров.—Начар купец пулать санран, ытах укҫан вӑйне те ӑнланмастӑн пулсан...

— Кам ӑнланать ӑна?—ыйтнӑ Фома.

— Епӗ!—шанӑҫлӑн каланӑ Шчуров.—Кашни ӑслӑ ҫынах ӑнланать... Йапшкӑ ӑнланать...Укҫа? укҫа вӑл, йӗкӗт, питӗ нумайа пӗлтерет! Сарса хур ес ӑна хӑвӑн умна, унтӑн ун тупсӑмӗ ҫинчен лайӑх шухӑшла. Вара ӑнланӑн,—ҫакӑ вӑл, сан умри укҫа, пӗтӗмӗшпех етемӗн вӑй-хӑвачӗ, укҫа—етемӗн ӑс-хакӑлӗ... Пин-пин етем сан укҫу ӑшне хӑйсен пурнӑҫне хунӑ. Есӗ пур,—савна ваш! кӑпа кӑмакана пеме пултаратӑн... Лар вара — мӗнле ҫуннине пӑхса... Ҫак вӑхӑтра вара ес хӑна чӑн-чӑн патша вырӑнне хурӑн...

— Ун пек тӑвакан ҫук...

— Мӗншӗн тесен, ухмахсен аллинче укҫа ҫук... Укҫана ӗҫе йараҫҫӗ... ӗҫ тавра халӑх тӑранать... а есӗ ҫав халӑх ҫинче—хуҫа пуҫса тӑратӑн... Турӑ мӗншӗн етеме тунӑ? Етем хӑйне пуҫҫаптӑр, тесе... Вӑл пӗччен пулнӑ, пӗччен пурӑнма кичем... ну, туррӑн—влаҫ тытас килнӗ... Ытах та турӑ етеме хӑйӗн сӑнарлӑ, хӑйӗн йеверлӗ тунӑ,—тетпӗр пулсан, етем те власа хапсӑнать... Укҫасӑр сана кам влаҫ парать?... Ҫавӑ-ҫав... Ну, ман валли укҫа илсе килтӗн-и?

— Ҫук...—ответленӗ Фома. Старик сӑмахӗсене пула, пуҫӗ ун йӑвӑрланса, пӑтранса кайнӑ, ҫавӑнпа та, йулашкинчен калаҫу ӗҫ ҫине куҫсан, Фома ҫӑмӑллӑн сывласа илнӗ.

— Аван теме ҫук! —каланӑ Шчуров куҫ харшисене шӑмарса. — Вӑхӑт иртнӗ, тӳлес пулать...

— Ыран ҫурринне тӳлӗпӗр...

— Мӗншӗн ҫуррине? Пӗтӗмпех пар!

— Укҫа питӗ кирлӗччӗ-ха...

— Суки-и вара? Анчах мана та пит кирлӗ...

— Йӗртак тӑхтасамӑрччӗ!

— Е, тӑван, тӑхтаса пулмасть. Ес асу мар... сирӗн пек шӳшшӳлмен—шанчӑклӑ халӑх мар вӑл... есӗ пӗр уйӑх хушшинчех пӗтӗм ӗҫне пӑлхатса йама пултаран... Мана ку—убыткӑ пулать. Ыран пӗтӗмпех кӳрсе пар, унсӑрӑн векселсене протестлетӗп... Ман вӑл—часах пулать!

Фома, Шчуров ҫине пӑхса, тӗлӗнсе кайса ларнӑ. Ку пӗрре те пасӑрхи, витӗр куракан ҫын пек пулса, шуйттансем ҫинчен калаҫакан сӑваплӑ старик мар... Сӑн-пичӗ те, куҫӗсем те ун пасӑр урӑхлачӗ.—халӗ ав ҫавӑ ҫынах нимӗн шеллевсӗр, хӗрхенӳсӗр пӑхать, пичӗ ҫинче, сӑмса ҫунаттисем патнерех, темӗнле шӑнӑрсем ӗмӗтсӗр чӗтрене тӑраҫҫӗ. Ытах та вӑхӑтра тӳлесе татмасан, вӑл чӑнах та векселсене протестлесе, фирмӑн йатне йама пултарасса, Фома лайӑх туйса илнӗ.

— Мӗн, ӗҫсем начар-им?—шӑлйӗрсе илнӗ Шчуров.—Ну, тӗрӗссипе кала—ӑҫта салатрӑн асу укҫине?

Фоман старике татах сӑнаса пӑхас килнӗ.

— Ӗҫсем пит савӑнӑҫлах мар ҫав,—каланӑ вӑл, салхуланса,—поставкӑсем ҫук... задаткӑсем илеймерӗмӗр... Ну, ҫавӑнпа йӑвӑртарах.

— Ҫапла-и?.. Пулӑшас-им апла?

— Кӑмӑлӑра тупмасӑр... вӑхӑтне пӑртак тӑсӑрах,—ыйтнӑ Фома, пуҫне именӳлӗн чиксе.

— Мм... аҫупа тусӑ пурӑннӑ йатпа пулӑшсан кӑна... Тен, пулӑшӑпӑр та...

— Хӑҫанччен тӑсма пултаратӑр?—ыйтнӑ Фома.

— Ҫур ҫулччен...

— Чӗрӗрен тавтӑватӑп...

— Тавтумалли йех ҫук... Ҫапла, вуннӗр пин те ултҫӗр сапра... Акӑ мӗн: ҫыр ес ҫӗнӗрен ҫав векселсене—вуниллӗклӗх, ку хисепрен процентне халех тӳле... шанчӑклӑ пултӑр тесе, икӗ баржушӑн саклат хыв...

Фома тенкел ҫинчен тӑнӑ та, кулкаласа:

— Ыран пырса парӑр векселсене... халех мӗнпурне тӳлетӗп...—тенӗ.

Шчуров та хӑйӗн пуканӗ ҫинчен ҫӗкленнӗ, унтан, шӑлйӗрсе тӑракан Фома ҫинчен куҫне илмесӗр, имшеррӗн кӑкӑрне хыҫкаласа:

— Капла та аван...—тесе хунӑ.

— Рехмет... ӑш сӑмахӑра!..

— Ҫаклӑнмастӑн ҫав ес... вара еп сана ӑшӑтаттӑм!—кахаллӑн каласа хунӑ старик, шӑлӗсене йӗрсе.

— Ҫапла! Ҫаклан сирӗн аллӑра...

— Ма, ӑпӑ пулать...

— Ӑшӑтӑр есӗр, мӗн калама...

— Ну, ҫитӗ, йӗкӗт!—сиввӗн каланӑ старик. — Хӑйа-ху ухмах вырӑннӗ картмастӑн пулсан та, ирттерех-ха... Ваййа пуҫма-пуҫ пӗтерчӗ те, начча мухтанма пуҫларӗ. Выльаса ил ес манран, вара тин—савӑннине ташша йар... Сывпулха... Укҫасене ыран валли хатӗрле...,

— Ан пӑшӑрханӑр. Сывӑпулӑр-ха?

— Турӑпа пӗрле пулӑр!

Фома, немӗртен тухса, алӑка хупсанах, старик вӑрӑмӑн йантравлӑн анаслаҫа йанӑ, унтан хӑйалтатулӑ баспа:

— Ей, ти-ив-ле-тлӗ турӑ амӑшӗ, ырлӑх алӑкӗсене уҫ пире...—тесе, йурла пуҫланӑ.

Китайри вăрçă

ШАНЬДУН ПРОВИНЦИНЧИ ÇАПĂÇУСЕМ

Йапонецсем Таньцзинь—Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участкинче çĕнĕрен наступлени тума пуçланăранпа вунă кун иртрĕ. Мартăн 13-мĕшĕнче çуран çарăн пысăк чаçĕсене пĕр çĕреле пухса, артиллерипе авиаци пулăшнипе, йапонецсем Льаньçадйань йатлă чукунçул станци патĕнче Китай çарĕсем çине хыттăн тапăннă. Китай çарĕсем йапонецсене хирĕç паттăрăн тăнă.

Тенçань йатлă хулана çăлса хăварма тăрăшса, Китай салтакĕсем виçĕ пин çынна йахăн вилнĕ. Вĕсемпе пĕрле хăйсен офицерĕсем те тата Китай çарĕсен унти командуйушчийĕ генерал Ван Мин-гуан та вилнĕ. Генерал Ван Мин-гуан, йапонецсен аллине тыткăна лекĕс мар тесе, перĕнсе вилнĕ. Фронтри корреспондентсем çапла пĕлтерĕççĕ: йапонецсем хула çине снарйадсемпе бомбăсем 20 пине çити кăларса йанă. Хулана туртса илес вырăнне вĕсем хулан ишĕлчĕкĕсене туртса илнĕ.

Йапони çарĕсем, вăрçă техники йенчен Китай çарĕсенчен темиçе хут малта тăнипе усă курса, кăнтăр йеннеле малала кайса, Линьчен йатлă хулана туртса илнĕ. Китай çарĕсем Линьченран кăнтăрала йапонецсен наступленине тытса чарнă, вĕсем, çĕнĕ подкрепленисем илсе, контрнаступлени тума пуçланă. Чукунçултан хĕвелтухăçнеле Ичжоу йатлă хула çине Йапони чаçĕсемпе пĕрле „Манчжоу-го" чаçĕсем те пĕр вăхăтрах тапăннă. Çакăн хыççăн Китай çарĕсен икĕ колонни партизансемпе пĕрле йапонецсен тылне пырса кĕнĕ те Йапони дивизине хупăрласа илнĕ. Тытăçса çапăçнă чухне Йапонин пĕр бригадине йăлтах пĕтерсе тăкнă. Китайĕцсем тăватă оруди, 50 грузовик, вуншăр пулеметсем, винтовкăсем тата ытти вăрçă хатĕрĕсем те нумай туртса илнĕ. Йапонецсем, китайĕцсене хирĕç тăма вăй çитерейменнипе кайала чакнă. Çав районта халь калама çук пысăк çапăçусем пулса пыраççĕ, вăл çапăçусенче икĕ йенче те пысăк сухатусем пулаççĕ.

Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен Китай çарĕн командирĕсем.

(Союзфото).

Китай çарĕсене пур çĕрте те партизансемпе унта пурăнакан халăхсем пулăшаççĕ. Вĕсем йапонецсем Хуанхе йатлă йуханшыв урлă хывнă кĕпере çĕмĕрнĕ. Циндао — Цзинань чукунçулĕ çинче Йапони салтакĕсем ларса пыракан тата вĕсене валли апат-çимĕç тийесе кайакан пуйăссене 18 хутчен çĕмĕрнĕ.

Шаньдун провинцинче пулса пыракан вăрçăн уйрăмлăхĕ çакăнта пулать: йапонецсем кунта Манчжури çарĕн вăйĕсене чылай илсе пырса тултарнă. „Манчжоу-го" çарĕ Шаньдун провинцинчен Манчжурине куçса кайнă хресченсенчен тăрать. Çав çарсем хăйсен тăванĕсене хирĕç вăрçасшăн мар. Манчжури чаçĕсем Китай йенне тарса каçасси массăлăн пулса пырать.

(ТАСС).

Хамăр çĕршывра

◆◆ Кăçалхи çул комсомол Тĕп комĕ йышăннă тăрăх, шкулта вĕренекен икĕ мĕлйун ача пионерсен лагерĕсене кайаççĕ. Лагерсене тытса тăмали укçа тенкĕ хисепĕ те чылай ӳсет.

◆◆ Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкин Комитечĕ Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулакансен пирвайхи спискине „Зерно" павильон отрăçлинче çирĕплетнĕ. Списăкра—Красноярск крайĕнчи, Украинăри, Крымри тата Атăл çинчи нимĕçсен республикинчи колхозсем пурĕ 274. Выставкăра пулас текенсенчен комитет 58.386 зайавкă илнĕ те ĕнтĕ.

◆◆ Хĕрлĕйалавлă ЕПРОН (експедиция подводных работ особого назначения) отрйачĕсем иртнĕ çулта 84 суднăна шыв айĕнчен тата чулсем çинчен кăларнă. Вĕсен шутĕнче 8 судни—йутçĕршывсен. Кăçалхи çул ЕПРОН татах нумай суднăсене шыв айĕнчен кăлармала.

◆◆ Краматорскри машинăсем тăвакан заводăн конструкцисене пухакан Левков йулташ мартăн 22-мĕшĕнче нормăна 5.600 процент, мартăн 23-мĕшĕнче—çав нормăнах 80 хут ирттерсе тултарнă.

(ТАСС).

„Йевропăри бастион"

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕш.(ТАСС). Англин „Економист" йатлă йерттсе пыракан економикăлă журналĕн март уйăхĕнчи тухнă номĕрĕнче çапла йатлă статйа пичетлесе кăларнă. Фашисла Германи Чехословаки çине тапăнма хатĕрленнине кура, статйара Чехословакин економикăпа çар ресурсисене тишкерсе тухнă.

Журнал шухăшĕпе, Германин çакăнти тĕллевĕсем — вăл стратегилĕ тĕллевсем, мĕншĕн тесен Германи малала та хăйĕн çарпа економикăлă експанçине Балкансем çине сарас тĕлĕшпе „Чехословаки тураттине" (журнал çапла çырать) сирсе пăрахса Чехословакин отемсен резервисене хăйĕн хĕспăшалланнă çар вăйĕсен составне кĕртессипе интереслĕнет.

Унтан Германи Чехословакирен чĕр таварсен тата йалхуçалăхĕн ресурсисене туртса илме шутлать.

Йулашкинчен Германи, континент çинчи индустрин пысăк центрĕсем пулса тăракан Чехословакин промышленнăç центрĕсене туртса илме те хирĕç мар.

„Германишĕн Чехословаки питĕ те кирлĕ çĕршыв пулса тăни пирки нимĕн иккеленмели те çук,—тесе çырать журнал.—Габсбург монархийĕ пĕчĕк татăксем çине арканса унăн территорийĕн пиллĕкĕмĕш пайĕ тата пурăнакан халăхсен шутĕнчен тăваттăмĕш пайĕ çĕç Чехословаки республики çине куçрĕç. Çав вăхăтрах ĕлĕк Австро-Венгрин пулнă çĕркăмрăкпе хăмăр кăмрăкăн пĕтĕм продукцийĕнчен 85 процент, металлурги промышленнăçĕн икĕ виççĕмĕш пайĕ, машинăсем тăвакан промышленнăç 60 процент, пир-авăр промышленнăçĕ 75 процент, сахăр промышленнăçĕ 93 процет ыхла Чехословаки аллине куçнă. Çапла майпа вара Виççĕмĕш империн çар вăй-хăвачĕ, Чехословаки территорийĕ пысăк мар пулин те, пысăккăн ӳсме пултарать".

Чехословаки Гитлер аллине Австри кĕрсе ӳкнĕ пекех кĕрсе ӳкме пултарать, тесе шухăшлани пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ,—тесе çырать журнал.

„Чехословаки Австрирен çак виçĕ тĕслĕхпе уйăрăлса тăрать: Пĕрремĕш—Чехословакире пурăнакан халăхсен нумай пайĕ нимĕçсем те пулса тăмаççĕ, çак халăхсем виççĕр çул хушши чăтнă нимĕç пусмăрне тепĕр хут чăтасшăн мар. Иккĕмĕш—Австри хăйне хăйĕн вăйĕсемпе сыхлама пултарайман, Чехословаки Австри пек мар вăйлă. Виççĕмĕш—Австрин туссем нумай пулнă, анчах сойузниксем пулман пулсан, Чехословаки Йевропăра çар тĕлĕшĕнчен чи вăйлă икĕ державăпа туслăхлă пулса тăрать".

Чехословаки çарĕнче 181.000 салтак тата лит аван вĕрентнĕ мĕлйун ытла резерв пур. Унăн çарĕ аван вĕреннĕ. Чехословакин çар саввăчĕсем тĕнчери чи лайăх савăтсен шутĕнче тăраççĕ. Çар савăчĕсене пĕрмайăх çĕршыв варрине куçарса пынă".

Малала журнал, Чехословакин оборонийĕ географи тĕлĕшĕнчен уйрăмлăх пулнипе çăмăлланать, тесе çырать. Чехословакипе Германи чикки сăртлă вырăнта пирки механизациленĕ çарсем атакă тума пултараймаççĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, Германин çар тĕлĕшĕнчи вăй-хăвачĕ Чехословакипе танлаштарса пăхсан—малтан мĕнле курăнни пекех пысăк мар,—тесе вывод тăвать журнал.

Чемберлен сăмахĕ

ЛОНДОН мартăн 24-мĕш (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пайан общинăсен палатинче тулашри политикă ыйтăвĕсем тăрăх пыракан прениссенче премйер Чемберлен пысăк сăмах тухса каланă.

„Епĕ çапла шутлатăп,—тесе каланă Чемберлен,—Англири кирек мĕнле правителствăн тĕллевĕ те лăпкă самана сыхласа усрасси пулать. Анчах та ку вăл епĕр нимĕнле условисенче те вăрçмастпăр, тенине пĕлтермест. Епĕр паллă договăрсемпе, обйазателствăсемпе çыхăнса тăратпăр, çав договăрсем тăрăх кирлĕ пулсан пирĕн вăрçмала пулать".

„Епĕ Лигă наци лăпкă самана сыхласа тăмали витĕмлĕ инструмент пулнине ĕненесси вăйлăн чакрĕ,—тенĕ Чемберлен.—Анчах та епĕ Лигă нацине чĕртме, тĕреклетме май пуррине ĕненетĕп".

Малала Чехословаки пирки пулса тăнă лару-тăру çинчен асăнса, Чемберлен çапла каланă:

„Чехословаки никама пăхăнмасăр тĕрĕс-тĕкел пурăнассине пăсма кирек мĕнле ирĕксĕрлесе хăтланнине Англи хĕçпăшал вăйĕпе хирĕç тăма хатĕрри Англине вăрçа кĕртсе йарасси патне илсе пынă пулĕччĕ. Хăйĕн пурнăç интересĕсене, пырса тĕкĕнмен районсенче Англи правителстви çакăн пек позици йышăнма пултараймасть. Çаксене шута илсе ĕнтĕ Англи правителстви кирлĕ гарантисене малтанах парса хума май çук, тесе шутлать".

Лăпкă самана йуратакан çĕршывсен конференцине пухасси çинчен ССР Сойузĕ панă сĕнӳ пирки Чемберлен малала çапла каланă: Англи правителстви ку сĕнӳве хăйĕлшĕн вырăнлă мар тесе шутлать, тенĕ.

Испани ыйтăвĕ çинчен Чемберлен çапла каланă: Англи правителстви малтанхи пекех „хутшăнас мар" позици çинче йулать, тенĕ.

Йулашкинчен Чемберлен хĕçпăшалланас программăна пурнăçа кĕртессине хăвăртлатма кирлине палла тунă.

Ачасен техникăлă станцинче (Шупашкар хули).

Укерчĕк çинче: Пионерсем авиамодельсем тăваççĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Малтанхи аçа-çиçĕм

Кăçалхи мартăн 22-мĕшĕнче çĕрле Чăваш республикин çурçĕр пайĕнче аслати авăтса çиçĕм çиçнине палăртнă. Шупашкар тĕлĕнче аçа-çиçĕм çурçĕр иртсен 1 сехет те 15 минутра пуçланнă, 1 сехет те 45 минутран чарăннă. Инçетри илтĕнекен аçа-çиçĕм мартăн 22-мĕшĕнче 23 сехетрен пуçласа мартăн 23-мĕшĕнче 1 сехет те 15 минутчен пынă.

Çак аçа-çиçĕм вăл кăнтăр хĕвеланăç йенчен ăнă сывлăш йухăмĕ килнипе пулнă. Сутçанталăкри йавленисенчен пĕри пулса тăракан аçа-çиçĕм, çакăн пек çуркунне март уйăхĕнче пит сайра-хутра çеç пулать.

Мартăн 22-мĕшпе 23-мĕшĕнче талăк хушшинче çанталăк метеорологилĕ условийĕ çакăн пек пулнă: Шупашкарти метеорологи станци сăнанă тăрăх мартăн 22-мĕшĕнче çĕрле 1 сехетре сывлăшри температурă 6 градус сивĕ, унтан çанталăк ăшăтма пуçланă, 5 сехетрен пуçласа 8 сехет те 30 минутчен тăман çунă; 12 сехет те 15 минутран пуçласа 13 сехет те 30 минута çитичченкăшт çăмăр çунă. Мартăн 22-мĕшĕнче çанталăк йĕрипен ăшăтса пырса, 13 сехет тĕлне 3,1 градус, 19 сехет тĕлне 4 градуса çитнĕ. 21 сехет те 30 минутран пуçласа вăйлă çил тапраннă, унăн хăвăртлăхĕ секундра 12 метр пулнă, çил вăйланса çурçĕр иртни пĕр сехет тăлне 14 метра çитнĕ те аçа-çиçĕм иртсе кайаччен тăсăлнă, 1 сехет те 45 минутран пуçласа вăйсăрланма тытăннă.

Мартăн 22-мĕшĕнче 12 сехет те 15 минутра çума пуçланă вăйсăр çăмăр çурçĕр иртсен 1 сехет те 45 минутченех кассăнкассăн çуса тăнă, мартăн 23-мĕшĕнче 1 сехет те 45 минутран 2 сехете çитиччен вăйлă çăмăр çунă.

Çак талăк хушшинче çăмăр çунин хулăнăшĕ 2,4 сантиметр пулнă.

И. Куçмин.

Ватă ухатник

ИШЛЕЙ. Йетĕрпекасси йалсоветĕнчи Уйкасри Георгий Харитонович Вастейĕв ухатник ĕçĕпе 31 çул хушши пурăнать. Вăл çав хушăра мĕн пурĕ 14 кашкăр, тилĕ, пăсара, куйан т. ыт. те нумай тытнă. Иртнĕ çулта вăл 2 кашкăр, кăçал 2 кашкăр тытнă. Вăл районри чи лайăх ухатниксен шутĕнче тăрать. Ăна районра темиçе хут та премиленĕ.

А. Мешков.

Выльав укçисене илчĕç

ИШЛЕЙ. Ишекри Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсене, иккĕмĕш пилĕкçуллăх (4-мĕш çулхи кăларăм) займĕн 6-мĕш тиражĕнче, чылай выльавсем тухнă. Сăмахран, Спиридонав йулташ 150 тенкĕ, Алекçейевпа Ваçилйĕв йулташсем 75-шер тенкĕ выльаса илчĕç.

А. Наумăв.

Йăнăша тӳрлетни

Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Павел Иванович Иванов тата Александр Петрович Куçмин йулташсене Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитет членĕнчен кăларас пирки 1937 çулхи нойаберĕн 27-мĕшĕнче йышăннă постановленийе пăрахăçа кăларса; асăннă йулташсене Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитет членĕнчех хăварнă.

Атăл çинче

Атăл шывĕ йерипенех тулса пырать. Мартăн 24-мĕшпе 26-мĕш хушшинче шыв 4 сантиметр хăпарнă.

Кăçал Атăл пăрĕ тапранасси пĕлтĕрхинчен кайарах йулать. Атăл пăрĕ апрелĕн 10-мĕшпе 20-мĕш хушшинче каймала тесе шутлаççĕ.

Пулни-иртнисем

◆◆ Шупашкарта, Йарославски урамра 53-мĕш №-лĕ çуртра пурăнакан Н. Е. Увакин нисçта ĕçлемесĕр йаланах спекуляци туса пурăннă. Вăл час-часах Мускава кайса спекуляци тума мануфактурă тата çĕлене тумтир илсе килнĕ. Халь Увакина суда панă.

◆◆ Анаткасри (Шăхасан р.) И. Д. Данилов хăйĕн ачишĕн алимент тӳлес мар тесе пытанса пурăннă. Уголовнăй розыск ăна çак кунсенче шыраса тупнă. Алимент тӳлессинчен пăраннăшăн ответ тыттарма Данилова суда панă.

◆◆ Патăрйел районĕнчи Çĕнĕ Ахпӳрт çыннисем—Н. Кудановпа К. Аблесов ĕçсе ӳсĕрĕлсе урамсем тăрăх пăшал персе çӳренĕ. Çавăн пек хулиганланса çӳренĕ чухне вĕсем Савдерăв килне кĕрсе пăшалпа персе Савдерăва йăвăр амантнă. Савдеров халь Патăрйелĕнчи больницара выртать. Кудановпа Аблесова тытса суда панă

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНОВ.

Шупашкарти саслă кино-театрта
Мартăн 27-мĕшĕнче
çĕнĕ, илемлĕ, саслă фильм
кăтартаççĕ
„ЗАПОРОЖЕЦ ЗА ДУНАЕМ"
ПРОГРАММĂРА КИНОЖУРНАЛСЕМ:
1. Сталинские соколы в Москве.
2. Союзкиножурнал № 12.
Сеанссем: 6 с., 7 с. 40 м. тата 9 сех. 20 мин. пуçланаççĕ.
Кассă кăнтăрла иртсен 2 сехетрен уçă.
Ачасене валли сеанссем:
Мартăн 28-мĕшĕнче
„Голубой рейд"
Мартăн 29 тата 30-мĕшĕнче
Серго Орджоникидзе
Сеанссем; кăнтăрла 12 сехетре тата 1 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.
Кассă ирхине 10 сехетрен уçă.

Йăптăх çăма пуçтарăр!
Лашасен тата ĕне выльăхсен йăптăх тăкас вăхăт çитет.
Коньухсем, выльăх пăхакансем, колхозниксем, йединоличниксем тата ыттисем пурте выльăхсем йăптăх тăкнă вăхăта ахаль ан ирттерсе йарăр!
Йăптăх çăма пуçтарса çăм хатĕрлекен сойуз складне парăр (складсем кашни район центăрĕнчех пур), йалсенче—çăм пухакансене парăр.
Йăптăх çăма тĕсĕн-тĕсĕн уйрăм пуçтарăр:
хĕрлине, шуррине уйрăм, ытти тĕссемпе хутăштармасăр, çавнашкалах пахалăх йенчен тасатса пуçтарăр
Çӳпçаплă çăма йӳнĕ хак параççĕ.
Таса йăптăх çăмшăн çăм хатĕрлекен сойуз çакнашкал хаксемпе килограмшăн тӳлет:

Шурă	Хура	Хĕрлĕ	Ытти тĕссем
Ĕне çăмĕ 4—80 Лашан 3—80	Ĕне çăмĕ 4—20 Лашан 3—40	Ĕне çăмĕ 4—20 Лашан 3—40	Ĕне çăмĕ 3—60 Лашан 2—90

Йăптăх çăм промышленнăçа валли хаклă сырйо пулнине асра тытăр!
Çăм хатĕрлекен сойуз.

ИККĔМĔШ ПЙАТИЛЕТКĂ
(ТĂВАТТĂМĔШ ÇУЛХИ КĂЛАРĂМ)
займне çырăнса илнисем, облигацисене еçĕр алла илнĕ-и?
ИККĔМĔШ ПЙАТИЛЕТКĂ (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) ЗАЙОМНЕ ИЛМЕ ÇЫРĂННĂ ГРАЖДĂНСЕМ, ОБЛИГАЦИСЕНЕ АЛЛА ИЛЕЙМЕННИСЕМ, хăйсем çырăннă тăрăх облигацисене районри перекет кассинче илме пултараççĕ.
Облигацисене алла илме рабочисен тата служăшчисен предприйати йе учреждени бухгалтеринчен займшăн мĕн чухлĕ тӳлев хывнине кăтартакан справкă илсе тăратмала. Колхозниксен тата уйрăм хуçалăхлă хресченсен займ укçине хывнине кăтартакан расчот квитанцине тăратмала.
Облигацисене алла иличчен, займ илме çырăннисем, выльавсенче шута кĕрейменççĕ.
Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) займ облигацийĕсене çырăнса илекенсене перекет кассисем
1938 çулхи ийунĕн 1-мĕшĕччен алла параççĕ.
Государствăллă Перекет Кассисен тата Государствăллă Кивçенлĕхĕн Тĕп Управленийĕ.

„КАПКĂН" подписчикĕсене!!!
„Капкăн" журнал нойаберпе декабĕр уйăхĕсемшĕн тухмарĕ. Тухман номĕрсемшĕн тӳленĕ укçана Сойузпичет Чăваш республикинчи подписчиксене кайала тавăрса парать. Çавăнпа подписчиксен журнал илме ăçта çырăннă —Сойузпичетĕн çавăнти уйрăмне пырса çак ик уйăхшăн тӳленĕ укçана кайала илмеле.
Чăваш республик тулашĕнчи подписчиксен çав илмен номĕрсемшĕн подпискă срокĕ тата икĕ уйăха тăсăлать.
Журналăн 2-мĕш номĕрĕ подписчиксем патне пайан саланма тытăнать.

Шупашкарти кирпĕч заводне
ПЛАНОВИК-ЕКОНОМИСТ КИРЛĔ
Хваттер пур. Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.
Çавнашкалах çезонлă тата йалан ĕçлеме РАБОЧИСЕМ КИРЛĔ
Обшчежити пур.
3—3. Дирекци.

„Чăваш Коммунĕ" Издателствине
Завхоз кирлĕ.
Пичет çуртĕ, 18-мĕш пӳлĕм.

Чăваш республикинчи Дезостанци
вăрман участкинчен 300 кубла метр вутă турттарса тухма парать.
Килĕшекенсен Шупашкарти Ново-Поперечнайа урамри 16-мĕш № çурта пымала.
ДИРЕКЦИ.

Чуварлейри санаторине
Медицинă ĕçне пĕлекен сестрасем—4 çын тата фармацевтсем кирлĕ.
Ĕçукçи государствăллă нормированийĕ тăрăх Коммуналлă услугăсем пур.

Академи театрĕнче
Мартăн 27-мĕшĕнче
Вырăсла спектакль
Н. В. Гоголь
РЕВИЗОР
(5 пайлă комеди)
Аслă режиссор Г. В. СТРАНСКИЙ лартать.
Художник И. Н. САПОЖНИКОВ.
Талон № 149.
Абонемент № 2, талон № 14.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 152. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.

X